Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 ЙАНВАР 8 ШАМАТКУН
6 (4819)-мĕш №

Чăваш Коммунĕ

20-мĕш çул тухать ● ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомĕн хаçачĕ ● Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСĔ:
Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати
ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторăн 6—67
Ред. заместителĕн 6—88
Редакци секретарĕн 4—40
Дежурнăйĕн 6—23

Ĕçхалăхĕн аслă поечĕ

Пайан вырăссен аслă поечĕ—Некрасов Николай Алексейĕвич вилни 60 çул тултарать. Некрасов Пушкин вилнĕ хыççăн вырăс литературинче чи пысăк поет-демократ пулнă, вăл Пушкин творчествинче суралнă ирĕклĕх йурри́не малала йурласа, ăна пусмăрта пурăннă халăх патне ситерме тăрăшнă.

Унăн сăвви-йуррисем хурлăхлă сасăсемпе, куççульпе, хайар çилĕпе тулнă. Вăл сасăсем—Российăри патша пусмăрĕпе асапланса, тертленсе пурăнакан, хаљ тесен хаљ пăлхава çĕклеме хатĕр тăракан хресченсен хайар çиллипе витĕмлĕ сассисем пулнă. Вĕсене вырăс литературине пуçласа Некрасов илсе кĕнĕ. Некрасова революцилĕ çул çине тăма аслă критик-революционер Белинский нумай пулăшнă.

Некрасов хăйĕн произведенийĕсен содержанийĕпе кăна мар, вĕсен художествăлă формипе те халăх поечĕ, вырăс поэзийĕн революционерĕ пулса тăрать.

Унăн произведенийĕсен темисем, дворйансен поечĕсенни пек, розă, шăпчăк тата çара илемлĕх мар, вăл подвалсем çинчен, хулари чухăнсен тата йалсенчи чухăн хресченсен калама çук йывăр пурнăçĕ çинчен хурлакса йурланă. Çакă, сынсен хурлăхне, пушине, асапĕне сăрашне çав тери витĕр туйса илме пĕлни, ăна Пушкин хыçĕнчи аслă поет туса хунă.

Вăл мĕн ачаранах хресченсен асапне, бурлаксен хĕплĕ пурнăçне курса ÿснĕскер, вырăс поечĕсенчен чи малтан хăйĕн йуратнă шывне—Атăла „пусмăрлăх, кичемлĕх, хурлăхпа куççулĕн шывĕ“ тесе йат панă, хăйне хурлăхпа тăвăру поечĕ тенĕ.

Некрасова лайăхрах, тĕрĕсрех ăнланас тесен, вăл пурăннă тапхăрти пурнăçа витĕр пĕлни кирлĕ. Пирĕн аслă поет-демократăн пултарулăхĕ Российăра капитализăм вăй илме пуçланă тапхăрта ÿссе саралнă. Ун чухне хресченсен пурнăçĕ нихçанхинчен те начартарах пулнă, вĕсене пĕр йенчен крепостник-помещиксем, тепĕр йенчен—урса ÿсекен капитализăм хĕстерсе тăма пуçланă. Помещиксен пусмăрĕ çумне капитализăм пусмăрĕ хутшăнни—хресченсене выçлăх умне кăларса тăратнă. 1861 çулта капитализăм хĕснипе пулнă реформă хресченсене пролетариата кăларса йанă. Çапла майпа хатĕрленĕ капитализăм хăйне вăљљи ĕç вăйĕ. Çапла майпа Российăра çĕнĕ клас—рабочи клас çуралса ÿсме пуçланă.

Некрасовăн капитализăм çурма-пролетариатла хресченсене хĕсĕрлесе, вĕсен йунне ĕçсе вăй илнине уççăн кăтартса сырнă произведенийĕсем („Современники“, Железная дорога“ т. ыт.). Карл Маркс „Капиталĕн“ чи лайăх иллюстрацийĕсем пулса тăраççĕ. Вăл, Некрасов, хăйĕн произведенийĕсенче хресченсен чăтма çук йывăр пурнăçне пур йенчен те лайăх кăтартса парса, пусмăрлăха хирĕç кĕрешме чĕннĕ. Революцилĕ çамрăксем унăн сассине илтнĕ, ăна ку тĕлĕшпе Пушкинран та мала хунă. Достоевский Некрасовăн тупăкĕ умĕнче калана сăмахĕнче „Пушкинпа Лермонтов хыçĕнчен Некрасов йатне çырмала“ тесен, халăх хушшинчен:

— Сÿлерех! Сÿлерех!—тесе кăшкăрнă сасăсем илтĕннĕ.

Революцилĕ çамрăксем Некрасова йуратнă, хăйсен идеологĕ вырăнне шутланă.

Унăн революцилĕ шухăшĕ ÿснĕ çемĕн ÿссе вăйланса пынă. 1860-мĕш çулсенче вăл кăларса тăракан „Современник“ журнал—революцилĕ демократсен çивĕч оргăнĕ пулса, Российăри революцилĕ-демократилĕ йухăмăн историнче пысăк вырăн йышăнса тăрать. Вăл, чаплă революционер-демократсем — Чернышевскипе Доброљубов йертсе пынипе, ĕçхалăхне пусмăртан кăларассишĕн кĕрешме чĕннĕ, вырăс çыннисен пĕтĕм ăруне пурнăç çине тĕрĕс куçпа пăхма вĕрентнĕ.

Некрасовăн „тĕрĕс мар сасăсем“ те илтĕнкеленĕ. „Некрасов, хăй çирĕпех пулманнипе, —тенĕ Ленин,—Чернышевскипе либералсем хушшинче чÿкепнĕ, анчах унăн пĕтĕм кăмăлĕ Чернышевский йенче пулнă. Некрасов хăй çирĕп пулманнипех либералла йăпăлтату кĕввисемпе сылăха кĕнĕ, анчах кайран хăйех вĕсем пулнишĕн пăшăрханнă тата вĕсем пирки халăх умĕнче каçару ыйтнă:

Не торговал я лирой, но бывало,
Когда грозил неумолимый рок,
У лиры звук неверный исторгала
Моя рука...

„Тĕрĕс мар сасă“ — вăт мĕн тенĕ вăл хăйĕн либералла йăпăлтату сылăхĕсем пирки“.

Анчах çакă „тĕрĕс мар сасăсем“ Некрасов поэзийĕн тĕп характерне улăштараймаи. Революцилĕ поет пулса, вăл революцилĕ шухăшĕсене çирĕп тытса тăнă, нихçан та революци патне чĕнме пăрахман. Вăл революционер-демократсен чи шанчăклă йурăçи пулнă. Ун чухнехи паллă революционерсемпе —Белинскипе, Чернышевскипе, Герценпа тата Доброљубовпа пĕр шухăшлă пулса ĕçлени Некрасова революцилĕ позици çине йалан-лăхах çирĕплĕнсе тăма пулăшнă. Некрасов ĕçсынисем, хăçан та пулин, пурпĕрех пусмăрлăх йывăрлăхне сирсе пăрахса, хăйсене вăљљи телейлĕ те савăнăçлă пурнăç тăвассине чĕререн ĕненсе тăнă. Хăйĕн „Чукуçул“ поеминче вăл ĕçхалăхĕ çине çапла шанчăк хурать:

„Тÿсĕ йăлтах—вăл вара ÿçĕ аслă
Ирĕк çулне хăйĕн кăкăрĕпе“.

Ку сăмахсене вăл поипăç çинче хăйне пĕрле ларса пыракан çамрăк ачана калать. Çапла вăл сĕршыва ирĕке кăларассине малашнехи çамрăк ăрусем пурнăçласси çинчен ĕмĕтленсе сунать.

Некрасов питĕ нумай ĕçленĕ, нумай çырнă, анчах унăн произведенийĕсенчен нумайĕшĕсем революцилĕ шухăшлă пулнă пирки çут тĕнчĕ кураймаи. Цензура пичетленĕ чухне те йаланах революцилĕ шухăшпа сунса тăракан хĕрÿлĕ йĕркесемпе куплетсене кăларса пăрахса, произведенисене пăсса пĕтернĕ.

Патша Российĕ революци умĕнхи çирĕм çул хушшинче Некрасовăнне 194 пин тиражпа 17 кĕнеке çеç кăларнă. Ун чухне ытти чĕлхесем çине куçарасси çинчен шухăшламали те пулман.

Некрасовăн произведенийĕсем совет сĕршывĕнче анчах халăх хушшине йышлăн саланма пуçларĕç. Аслă социализăмла революци хыççăнхи 20 çул хушшинче Некрасовăнне 5.409.000 тиражпа 165 кĕнеке кăларнă. Вăл хисеп унăн йубилей йачĕпе кăларакан кĕнекисемпе тата та ÿсет. Вырăсла çеç мар, совет сĕршывĕнче пурăнакан ытти халăхсен чĕлхисемпе те нумай пичетленеççĕ.

Некрасов произведенийĕсенчи революцилĕ хĕрÿлĕх пайан кунченех пурăнать, унăн произведенийĕсем вулакансене çулăмлантарса, ĕçхалăхĕн тăшманĕсемпе кĕрешме хавхалантараççĕ.

Вăл ирĕклĕх çинчен, халăхсен туслăхĕ çинчен, танлăх çинчен, пуйан та культурăлă тата савăнăçлă та телейлĕ пурнăç çинчен ĕмĕтленсе йурланă. Унăн ĕмĕчĕсем пирĕн социализăмла сĕршывра пĕтĕмпех пурнăçа кĕчĕç. Пирĕн сĕршывра ĕнтĕ çынна çын експлоатацилес тискер йăлана ĕмĕрлĕхех пĕтернĕ, пирĕн сĕршывра—„Кам ĕçлет, çав çийет“. Харам пырсене пĕтернĕ. Ĕçсĕрлĕх çук пирĕн сĕршывра. Пур нацисем те тăванлă, вĕсем пурте ирĕк те телейлĕ тата пуйан та культурăлă пурнăçпа савăнса пурăнаççĕ. Çавăнпа та вĕсем хăйсен пайанхи пурнăçĕ çинчен ĕмĕтленсе йурланă аслă сăвăçăн мухтавлă йубилейне пысăк уйав туса ирттереççĕ.

Колхозсен çулталăкри ĕçĕсен отчотлă кампанийĕ çинчен

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1938 çулти йанварĕн 2-мĕшĕнче йышăннă постановлени

Халăх Комиссарĕсен Совечĕ, колхозсен çулталăкри хуçалăх ĕçĕсене итог туни тата вĕсене колхозниксемпе йединоличниксен массисем хушшинче сÿтсе-йавни —хуçалăхпа политикăлă ĕçре пит те пысăк вырăнта тăрать тесе шутлать. Колхозсен çулталăкри ĕçĕсен отчотлă кампанине хуçалăхпа политикăла пысăк кампани пек организацилемеле, иртнĕ стахановла çулти пит те паха çитĕнÿсене колхозниксемпе йединоличниксен массине анлăн кăтартмала, колхозсемпе колхозниксен массисем вăйла тырпулшăн большевикла кĕрешнин образецĕсене кăтартмала, колхозниксен пуйан та культурăлă пурнăçĕ ÿснипе кăтартмала, çакăн тăрăх вĕсене йалхуçалăх ертелĕн Сталинла уставне малашне пурнăçа кĕртессишĕн, вăйлă тырпулшăн, выљăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе çĕклессишĕн, 1938 çулхи çуракине лайăх ирттерессишĕн, колхозсене организацине хуçалăх тĕлĕшĕнчен çирĕплетессишĕн кĕрешме мобилизацилемеле.

Колхозсем 1937 çулта тунă çитĕнÿсем çинчен ăнлантарса пани йединоличниксене колхоза кĕртес ĕçĕн çĕнĕ хумне çĕклемеле.

Отчот кампанине ирттернĕ май, çĕрĕç оргăнĕсен колхозсенче учотпа финанс хуçалăхне татăклăн лайăхлатмала. Колхозри учот ĕçĕн кадрĕсене, унта хĕсĕнсе кĕнĕ тăшманла етемсенчен, колхоз пурлăхне çаратса вăрласа пĕтерекенсенчен тасатмала, çак ĕçĕн питĕ кирлĕ участкине ĕçре тĕрĕсленнĕ тÿрĕ ĕçлекен работниксене çирĕплетмеле.

Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Çĕрĕç Халăх Комиссариатне, районри çĕрĕç пайĕсен пуçлăхĕсене, МТС директорĕсене 1936 çулта тунă йăнăшсене кăсал тăвассинчен асăрхаттарать, пĕлетĕр отчот кампанине хăй тĕллĕн пуласса шаннă, сакна пула отчотлă кампани техническй ĕç пек çеç пулса иртнĕ.

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ **йышăнать:**

1. Çĕрĕç халăх комиссариачĕпе райĕçтăвкомсене отчотлă кампани ĕçĕсене организацилеме районсемпе колхозсене отчетлă работниксем йама. Çавăн пекех хуласемпе район центрĕсенчен профсойуз организацисемпе, финанс халăх комиссариачĕпе банк оргăнĕсемпе пĕрле, колхозсене çулталăкри ĕçĕсен отчотне тунă çĕрте пулăшма шутĕç работниксене йама хушас.

2. 1938 çулти йанварĕн 20-мĕшĕ тĕлне пур колхозсенче те колхозсен хуçалăх ĕçĕсене документсем тăрăх ревизи туса пĕтермеле, ревизи тунă чухне уйрăмăнах —колхоз пурлăхне çаратса вăрласа пĕтернисене кăтартакан фактсем çине, çавăн пекех колхоз пурлăхне пăхса усрасси мĕнле тăни çине çавăрăнса пăхмала.

3. Колхозсене парăмлă хатĕрлев оргăнизацисене, потребкооперацине, государствă, хуçалăх тата общественнăлă организацисене йанварĕн 15-мĕшĕнчен продуктăсемпĕн, материалсемпĕн, колхозсем тунă ĕçпĕн тата ытти пару-илÿсене йăлтах парса татма хушас. Райĕçтăвком председателĕсен, районти çĕрĕç пайĕн пуçлăхĕсен, МТС директорĕсен, государствă банкĕпе Финанс халăх комиссариачĕн оргăнĕсен парăмсене шыраса илме пулăшмала.

Хăйсен парăмĕсене колхозсене памасăр тăракансене суд умĕнче ответ тыттарма прокуратурăла хушас.

4. Йалхуçалăх ертелĕн уставĕ тата ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1936 çулти августăн 14-мĕшĕнче йышăннă постановленийĕ тăрăх, колхозсен çулталăкри отчочĕсене тумали тата сÿтсе-йавса çирĕплетмелине срукĕсемпе йĕркисене, çапла, тăвас:

а) 1938 çулти февралĕн 1-мĕшĕ тĕлне пур колхозсенче те халăх хуçалăхĕн учочĕн тĕп управлени çирĕплетнĕ формă тăрăх çулталăк отчочĕсене туса пĕтермеле;

б) 1938 çулти февралĕн 10-мĕшĕнчен пур колхозсенче те колхозниксен пухувĕсем туса ирттермеле. вĕсенче 1937 çулхи итоксем çинчен тата правлени ĕçĕсем çинчен колхоз правленипе ревизи комиссин отчотлă доклачĕсене итлемеле. Çак пухусенче колхозсен 1937 çулти отчочĕсене пăхса тухса çирĕплетмеле. Çак пăхăтрах колхозсен 1937 çулхи ĕçĕсем çинчен йединоличниксен пухувĕсенче колхозсен отчочĕсене организацилемеле.

5. Районсенчи çĕрĕç пайĕсен пуçлăхĕсене, МТС директорĕсене кашни колхозăн çулталăкри отчотне правлени председателĕпе, ревизи комиссии председателĕпе тата колхоз счетоводĕпе пĕрле тĕплĕн тĕрĕслеме хушас, отчотсенче йалхуçалăх ертелĕн уставне пăснисем пулмалла мар.

6. Çĕрĕç халăх комиссариатне йанварĕн 10-мĕшĕнчен колхозсенче çулталăкри ĕçсен отчот кампанине ирттермели йĕркесем çинчен районсенчи çĕрĕç пайĕсен пуçлăхĕсене, МТС директорĕсене, районсенчи çĕрĕç пайĕсемпе МТС-чи колхоз учочĕпе ĕçлекен работниксене вĕрентме хушас.

7. Çĕрĕç халăх комиссариатне йанварĕн 10-мĕшĕнчен пуçласа колхозсенче çулталăкри отчот кампанийĕ мĕнле иртсе пыни çинчен кашни вунă кунра Халăх Комиссарĕсен Советне пĕлтерсе тăма, мартăн 1-мĕшĕнче çак ĕçĕн итогне тăратма хушас.

ЧАССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕ **Л. Спасов.**

ЧАССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн ĕçĕсене туса пыраканĕ **Н. Жуков.**

Николай Алексейевич Некрасов

Лебедев художник ÿкерчĕкĕ (1877 ç.)
Союзфото репродукцийĕ.

Некрасов тата пирĕн тапхăр

Некрасов халăха ирĕклĕх тата телейлĕх парас шухăшпа пурăннă. Çавăнпа та вăл пирĕн тапхăра сывăх тăрать. Вăл експлоататорла классен поечĕсем пек темле, пĕлĕт хыçĕнчи, пурнăçа кĕме пултарман, фантазилĕ телейлĕх çинчен мар, çĕр çинчех пурнăçа кĕме пултаракан конкретлă телейлĕх çинчен шухăшланă. Епĕр мĕнле телейлĕхшĕн халĕ кĕрешетпĕр, вăл та çавăн пек телейшĕн кĕрешнĕ.

Некрасов вилес умĕнхи чăтма çук йăвăр асаплану минучĕсенче те хăйне пĕтĕм халăхăн телейĕ çывхарса килнине шанса тăнипе лăплантарнă:

„Свободной, гордой и счастливой
Увидишь родину свою“.

Ку унăн пĕтĕм пурнăçĕ тăрăх пынă пĕртен пĕр ĕмĕчĕ пулнă: вăл хăйĕн тăван сĕршыв телейлĕ, ирĕклĕ, тата мухтавлă пулнине курасшăн çуннă.

Епĕр, çакă ĕмĕт пурнăçланичченех пурăннисем, çав ĕмĕте пĕтĕм чун-халпе панă сынна тавлă кăмăлпа аса илетпĕр.

Унăн генилĕ кĕнекине уçса тухăр-ха. Есĕр унта кашни страницăра пекех çакăн пек ыйтува куратăр:

„Где же ты, тайна довольства народного?“

Мĕн ачаран пуçласа йулашки сывлăшĕ тухиччченех Некрасова çакă ыйту асаплантарнă:

„Руç çĕрĕнче кам пурнăçĕ
Хавaслă та тулли?“

Çавăн пекех, кашни страницăра пекех çавă ыйтусем çине ответсем тупатăр:

„Холодно, странничек, холодно...“
„Голодно, родименький, голодно...“

Ун чухнехи вăхăтра вăл кирĕк-ăçта пăхсан та „пиншер çул пыракан хурлăха“ çеç курнă. Ун чухнехи Российă çинчен вăл çапла çырнă:

„Серо, серо. Глупо, дико, глухо и
почти безнадежно“.

Уншăн вăл вăхăтри Российă çакăн пек йалсенчен çеç тăнă:

„Сапăккасси те Шăтăклăх,
Çаракасси, Чĕтрекасси,
Çунăккасси, Çименкасси,
Тырпулманĕçел те пур...

Унăн кĕнеки çĕнĕ тапхăра курассишĕн çуннипе, ун çинчен калана пророклă сăмахсемпе, ăна чĕререн кĕтнине кăтартакан çулăмлă шухăшсемпе тулнă. Вырăс халăхĕ йаланлăхах çĕнтерессине пĕрмайах ĕненсе пурăннă, мĕншĕн тесен—

„Халăх чĕрийĕ
Ыттăн, ыттăн,“—пулнă уншăн.

Вăл „Кама пурăнма лайăх Руç çĕрĕнче“ поеминче ун чухнехи Российă тăрăх „Хĕнемен кĕпернине, Çаратман вулăсне, Пуйанлăх йалне“ шырать. Шырать, анчах тупаймасть. Вăл пирĕн çине, хăйĕн инçетри, пысăк савăнăçлă ăрăвĕсем çине пăхса, вăл ăруpa хăй пурăнса курма пултарайманнишĕн кăшăрханать:

„Жаль только—жить в эту пору
прекрасную

Ужь не придется—ни мне, ни тебе“.

Халăх телейлĕ пуласси çинчен ĕмĕтленнипе кăна мар, Некрасов халăх телейĕшĕн хăй ывăнма пĕлмесĕр кĕрешнипе те сывăх пире.

„Даром ничто не дается: борьба
Жертв искупительных просит.“

тесе ĕнентернĕ вăл çамрăк ăрусене. Пусмăр тÿсекен халăх массине революцилĕ кĕрешĕве çĕклесси—унăн пĕтĕм пурнăçĕн, пĕтĕм поэзийĕн задачи пулса тăнă.

Ĕçсыннисене ирĕке кăларассишĕн вăйлăн кĕрешессине—прогрес çинчен, „халăхсем кăмăллă килĕшесси“ çинчен хитре сăмахсем çырнипе улăштарма тăрăшакан либералсене çав тери кураймаи. Вăл революцишĕн кĕрешекен паттăрсене мухтаса йурланă, революци патне чĕннĕ:

„Тăвăл пĕрех килсе кĕтĕрччĕ!..
Хурçă кĕç-кĕç тăканать“.

Некрасовăн хурлăхлă кĕнекисене вуланă чухне хамăрăн социализăмла строййăн улăп пек çитĕнĕвĕсене ирĕксĕрех аслă поетăн сăввисенче кăтартнă революцичченхи ĕçхалăхĕн пурнăçĕпе танлаштарса пăхатăн.

Сăмахран, çав сăвăсенче пайанхи вулакан ун чухне господасем — ĕççыннисен пурнăçĕпе сывлăхĕшĕн „тăрăшнине“ курать. Чухăн хресчен йăвăр чирленĕ. Старăстă телейсĕрскерне хĕрхенĕ пек пулса аптекăна лекарствă илме йарать. Вăл вăхăтра помещик Петербургра пулнă. Старăстă ĕçĕ çинчен пĕлсен, помещик урса кайнă, вара старăстă патне çапла приказ йанă:

„Впередь расходов таких не иметь.
Деньги с миру взыскать... а лекарство
Для крестьянина лучшее—плеть.“

Некрасов пирĕн тапхăрта пулас пысăк строителствăсене сиснĕ. Вăл сăмахран, Атăл çинчен çырни—халĕ Куйбышев сывăхĕнчи гигантлă ĕçсем çинчен пророкла шухăшланине пĕлтернĕ пекех туйăнать.

„Увы. Я дожил до седин,
Но изменился мало.
Иных времен, иных картин
Провижу я начало—
В случайной жизни берегов
Моей реки любимой;
Освобожденный от оков,
Народ неутомимый
Созреет, густо заселит
Прибрежные пустыни;
Наука воды углубит:
По гладкой их равнине
Суда—гиганты побегут

И будет вечен бодрый труд
Над вечной рекою...“

Некрасовăн çак йĕркесене [illegible] чухне пĕтĕм чунĕне инçетри [illegible], пирĕн пайанхи тапхăра куçса [illegible] пулнă.

[illegible]

Некрасов çинчен паллă мар çын аса илнисем

„Некрасов ашшĕн именийĕ кÿршĕлĕ йалсенчи кашни йарославецах, поет Петербурга кайсан ун патне пынă, вăл вĕсемпе савăнсах каласнă. Килвĕ çынсем ăна хăйсен савăнăçĕсемпе хуйхисем çинчен каласа панă.

Некрасов ашшĕн хресченĕсенчен пĕрне çĕнĕрен тăвакан çуртсенче кăмакасем тума подрйад илсе Петербургра пуйма телей пулнă. Вăл пĕрмайах Некрасов патне çÿресе, унран ашшĕнчен ăна пĕтĕм çемйипе тÿлесе илме тăрăшăр тесе ыйтнă. Некрасов хăйĕн ашшĕ патне çырнă çырăвĕсенче кăмака тăвакана ирĕке кăларма хĕрÿлĕн ыйтнă. Анчах ашшĕ, унăн хресченĕсенчен пĕр кăмака тăвакан çеç оброк çинче пурăнса укçа нумай тÿлекенни пулнă пирки, ирĕке йама килĕшмен.

Çак кăмака тăвакан вăтă барин патне хаклă ерехсем йе ала теккĕлĕх ытти йапаласем йарасси çинчен канашлама прăçник умĕн Некрасов патне пынă.

— Ĕс ун патне нимĕн те ан йар,—тесе канаш панă пĕрехинче, хăйĕн хресченне ирĕке йама килĕшмен ашшĕ çине çиленнĕ Некрасов.

— Вăтă барин çиленет вĕт, мана сенчен чи хаклă пулать йала чĕнсе илет, елĕ виçĕ çуртра кăмака тума подрйад илнĕ, кăмака тăвакансен ертелĕ пысăк—йапăха тухăп.

— Мана итле. Хамах йала таврăнасшăн, анчах чирлĕ, тесе хăвăрăннисем патне, йала çыру çыр.

— Мĕн тума ку?—Ыйтнă кăмăлсăрланнă кăмака тăвакан.

— Курăпăр мĕн пулĕ,—ответленĕ Некрасов. Кăмака тăвакан шутласа çапла каланă:

— Паллă, есĕ пире шеллетĕн, мана та усал сунмастăн. Çапла, вăтă барин патне прăçник умĕн гостиницă йамала мар, йала çыру çырмала.

Некрасов хăйĕн ответне çирĕплетнĕ. Çак калаçу ман умра пулса иртрĕ. Кăмака тăвакан тухса кайнă хыççăн, Некрасов каларĕ:

— Çынна тăна кĕртме хамăнах суйма, ыттине те çапла тутарма тивет, крепостнойран çавăн чухлĕ укçа ыйтни ниме йурăхсăр, вăл 15 çулта хăйĕншĕн оброкпа нумай укçа тÿленĕ... нимĕн те пулмĕ тесе, хăраса ÿкĕ“.

Некрасов çинчен паллă мар çын асаилнисенчен сыпăкне илсе пичетлени çав манăçа тухнă асаилÿ.

Çак кунсенчех татăклă улшăну кирлĕ

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б)П Тĕпкомĕ çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе практикăла кăтартса пани тăрăх ĕçлесе ĕçе лайăх, образецла организацилесси—партипе совет организацийĕсем умĕнче тăракан кĕрешÿлĕ задач пулса тăрать.

Вăхăт иртсех пырать. ПСК(б)П Тĕпкомĕ çуракине хатĕрленесси çинчен йышăннăранпа чылай вăхăт иртрĕ. Çавах та, 1938 çулхи çуракине хатĕрленес ĕçре татăклă улшăну туни çук. Вырăнăн-вырăнăн хускану пурри палăрать пулин те, чылай колхозсенче ĕç вырăнтан тапранмасăрах тăрать.

Акă, йалкор Галкин йулташ пĕлтернĕ тăрăх, Кив-Шулханти „Смычка“ колхозра (Вăрмар р-нĕ) вăрлăхсене суртлама тытăнман та. Çавăн пекех кунта агротехникăла ĕçсене те хакламаççĕ, пухăннă кĕле колхозниксем сырмана тăкаççĕ.

Вăрлăх пирки Вăрнар районĕнче ку ĕç пит йапăх тăрать. Колцовкăпа тата Синдимиркинпа Карачурари колхозсенче çеç вăрлăхсене суртласа ситеĕклĕ тасатса хунă.

Елĕк районĕнчи „Ĕçлĕх“ колхозра та вăрлăхсене суртлама тытăнман, çавăн пекех суртлă вăрлăхпа та хаљ те улăштарман. Кунсăр пуçне тата йалхуçалăх машинисене те хакламаççĕ ку колхозра, вĕсем йусавсăр лараççĕ,—тесе пĕлтерет Н. Кузнецов йалкор.

Елĕк районĕнче „Ĕçлĕх“ колхоз пĕртен пĕр тĕслĕх мар. Кунта районĕпе мĕн пурĕ те 13 процент çеç вăрлăхсене суртласа тасатнă. Уйрăмăнах районра клевер вăрлăхĕ хатĕрлес тĕлĕшпе ĕç пит йапăх. Районĕпе мĕн пурĕ 600 центнер киолĕ пулсан, пайан куна 180 центнер çеç хатĕрленĕ. Клевер вăрлăхĕ пирки кăçал Ишлей районĕ те йапăх ĕçлет.

Ишлей районĕнчи хăшпĕр колхозсем МТС машинисем çине шанса ларса, лаша вăйĕпе ĕçлемели машинисене хакламаççĕ. Ойриçуртри Потомкин йачĕпе тăракан колхозра плугсем йур айĕнчех, кĕркунне йеппе лартнă, çаплипех лараççĕ. Çавăн пекех колхозра вăрлăхсене суртлас ĕçе те тытăнман.

Йалхуçалăх машинисене тирпейлĕ тытма тăрăшман колхозсем урăх районсенче те пур. Акă, йалкор Лазарев йулташ пĕлтернĕ тăрăх, Йетĕрне районĕнчи „Правда“ колхозра плугсем, сÿресем ăçта кирлĕ унта сапаланса выртаççĕ. Молотилкăсем те йур айне пулнă.

Колхозниксем тата колхозницăсем хушшинче социализăмла ăмăртăва анлăн сарса ĕçлени кайа йулнине тата çитменлĕхсене пĕтерессинче шанчăклă май пулса тăрать. Çавна колхоз руководителĕсен, вырăнти парти тата совет организацийĕсен халех пуçарса йамала.

1938 çулта татах та пысăк çитĕнÿсем тăвассишĕн

СĔНТĔРВĂРРИ. Камайевă йаленчи урапа-çуна тăвакан „Древообделочник“ промертел çĕнĕ çула хăйĕн çулталăкри планне 115 процент тултарнипе кĕтсе илчĕ. Халĕ промертел членĕсем 1938 çулта татах та пысăк çитĕнÿсем тăвассишĕн кĕрешеççĕ, кашнийех пĕр-пĕринпе социализăмла ăмăртса ĕçлеме пуçларĕç. Урапа тăкăнĕпе çуна тупанĕ тума вăрман касса хатĕрлекен Кузьмин бригади кулленхи нормăна 200—250 процентчар тултарса ĕçлет. Акă, вăл, йанварĕн 1-мĕшĕнчен 5-мĕшне çитиччен 5 кун хушшинче вăрман касас плана 251 процент тултарчĕ. Çакăн пекех çуна тупанљ чуглакан маçтăр Ухарев кунне 12-мăшăр çуна тупанĕ тата 1-мăшăр çуна туса пыма пуçларĕ. Ухарев йулташ хăйпе пĕрле ĕçлекен рабочисене йаланах хăй пример парса, ĕçе пахалăхлăн, тĕплĕн тума вĕрентет.

Николай Алексейевич Некрасов вилнĕренпе 60 çул тултарчĕ

АСЛĂ ПОЕТ-ГРАЖДАНИН

ВЫРАС ХАЛĂХĔН АСЛА ПОЕЧĔ

Пайан, 1938 çулти йанварĕн 8-мĕшĕнче, вырăс халăхĕн аслă поечĕ Николай Алексейевич Некрасов вилнĕренпе утмăл çул çитрĕ.

Некрасов 1821 çулти декабĕрĕн 4-мĕшĕнче çуралнă. Ача чухнехи кунçулĕсем унăн Грешневăра—ашшĕн Йарослављ çывăхĕнчи имени́нче иртнĕ. Некрасовăн ашшĕ сĕмсĕр помещчик, хăйне мăнна хуракан крепостник пулнă. Çамрăк Некрасов ирех хресченсене пусмăрланине, айăпсăр айăпланине, вĕсем çине тискеррĕн пăхнине туйса илме пуçланă. Унăн хăлхисенче Атăл бурлакĕсем ахлатни, найкăшни йанăранă. Çак ача чухне курнисем Некрасов чĕрине ĕмĕрлĕхех кĕрсе вырнаçнă.

Ашшĕ ăна офицер тăвасшăн пулнă, анчах Некрасова çар службине илĕртмен. Вăл сăвăсем çырма пуçланă та ĕнтĕ, унăн Петербурга çĕршывăн политикла тата культурăла центрне кайас шухăш çуралнă. Вунçичĕ çулти çамрăк Некрасов 1838 çулта Петербурга лекет. Хăйне итлеменшĕн ашшĕ Некрасова мĕнле те пулин материалă пулăшу пама пăрахаť...

Çамрăк поетăн шавлă пысăк хулара пурăнма нимĕнле средствă та пулман. Унăн çурчĕ те, укçи тенки те, ĕç те пулман. Петербургра Некрасов хăрушă пурнăç шкулĕ витĕр тухнă. Вăл чăннипех те хăрушă выçлăха тӳссе иртернĕ, унăн тăхăнмали ăшă тумтир пулман, вăхăчĕ-вăхĕчĕпе çĕр каçмалăх кĕтесĕ те пулман. Некрасовăн вичкĕн куçĕсем хăй пек çуртйĕрсĕр хĕнхур тӳссе иртерекенсем паха столицăра нумай иккенне асăрханă, тутă, телейлĕ, пур йенчен те çителĕклĕ пурăнакансенчен хĕнхурлисем чылай нумайраххине курнă.

1843 çулта Некрасов вырăссен аслă критикĕпе—Белинскипе паллашаť.

Некрасов идейă тĕлĕшĕпе ӳссе пырассинче Белинский питĕ те пысăк вырăн йышăнса тăнă, çавăнпа та поет ăна хумханса, пĕтĕм чĕререн паранса пурнăç вĕçне çитиччен йуратнă.

Белинский Некрасова политикла шухăшлама вĕрентсе çитернĕ. Белинский хăйĕн ăрăвĕн демократилĕ тата ирĕке йуратакан пĕтĕм пайĕн учителĕ пулаť тесе, Некрасов питех те тĕрĕс шутланă.

Некрасов пусмăрти халăх массисен шухăшĕсемпе настройенийĕсене кăтартса паракан поет пулнă. Ленин хăйĕн Некрасов çинчен калакан ĕçĕсенче Некрасовăн мĕн пур шухăш-кăмăлĕ Чернышевский йенче тăраť тесе палăртнă, а Чернышевский XIX ĕмĕр варринче Российăри революцилĕ партине йертсе пыраканĕ пулнă.

Вырăссен тепĕр аслă писателĕпе Салтыков—Щедринпа пĕрле, Некрасов хитре сăмахсемпе халăха революцирен пăрса йама тăрăшакан либералсен крепостникле ăшчиккине пĕр шеллемесĕр тăрă шыв çине кăларса пынă. „Тата Некрасовпа Салтыков вырăс общественне,—çырнă Ленин,—крепостник-помешчикăн тул йенчен сĕрсе йакатса лартнă пĕлӳлĕхĕ айĕнчи тискер кайакла интересĕсене уйăрса илме вĕрентнĕ, çавăн пек типсен мăнаçлăхĕпе чунсăрлăхĕ çине тарăхма вĕрентнĕ...“ (XII том, 9 стр.).

Белинский, Чернышевский тата Доброљубов Некрасовшăн ăна çутта кăларакан, пурăнма тата ирĕклĕхшĕн, халăхшăн кĕрешме вĕрентекен учителсем пулнă. Вĕсем унăн политикла руководителĕсем тата вĕрентсе ӳстерекенĕсем пулнă.

Писсе çитнĕ политикла ăс-хакăл, чĕререн ăнланса халăх йенне, хресченсен йенне куçни, патша влаçне, крепостник-помешчиксене, експлоататорсене курайманни Некрасовăн генине ӳссе сарăлса пыма май панă.

Сарлакан та тарăнăн çырассине, халăхшăн чирлесе хуйхăрассине, пусмăрлакансем çине тарăхассине, революциле малашлăха—унăн поесине вилĕмсĕр тăвакан пахалăхсене пурне те—Некрасов революцилĕ демократин политикла лагĕрĕнче туйаннă. Политикла ăнлану тăртанса çитни Некрасова вырăс халăхĕн аслă поечĕ туса хунă.

1861 çулта Доброљубов вилнĕ. 1862 çулта правителствă Чернышевскине арĕсленĕ те ăна катăргăна йанă. Çавăн пек репреççисем пулнă пулин те, Некрасов хăй ун чухне кăларакан „Современник“ журнал кунçулĕшĕн тата хăйĕн пурнăçĕшĕн шикленнĕ пулин те поет, журнала революциле çулйĕрĕпех илсе пынă тата хăйĕн поезин çулйĕрне улăштармасăр, ĕлĕкхи пекех революцилĕ сăвăсем çырнă. Çаксем пурте 1866 çулта „Современник“ журнала хупса лартасси патне илсе пынă. Анчах Некрасов ун хыççăн та хăйĕн кĕçкĕшăлне аларан пăрахман.

70-мĕш çулсенче Некрасов хăйĕн чи пысăк произведенине — „Кама лайăх пурăнма Руç çĕрĕнче“ поемăна çырса хатĕрлет.

Çак поемăра Некрасов революцилĕ кĕрешӳн çулйĕрĕ çинчен йурланă, вăл çулйĕрпе

„...Вăйлă чунсем кăна,
Кĕрешме, ĕçлеме
Туллин йуратакансем...“

пыраççĕ. Некрасов çĕнĕрен, ĕлĕкхи пекех, хăй литературăра ĕçленĕ пĕтĕм вăхăт хушши чĕннĕ:

„Мăшкăлрисем патне кай,
Кăмăлсăррисем патне кай,
Унта кирлĕ ес“.

Крепостниксем-помешчиксем çине поет çапса аркатакан строкасем ывăтаť. Акă поетăн сăввисенчен пĕрин сӳжечĕ:

Чухăн хресчен хăрушлăн чирленĕ. Старăстă аптекăна емел илме йанă. Помешчик ун чухне Петербургра пулнă. Старăстă мĕн тунине пĕлнĕ те, помешчик урса кайса старăстă патне хăрушă приказ çырнă:

„Ун пек тăкак урăх ан кăлар.
Укçа миртен шыраса ил... емел
Хресченшĕн чи лайăххи —
чăпăрка“.

Пуринчен ытла Некрасов ĕçпе сăмах уйăрăлса кайнине курайман, сăмахпа халăхшăн тухса калакан, анчах ĕçре пĕтĕмпех пусмăрлакансемпе тата халăха експлоатацилекенсемпе пĕрле тăракан çынсене курайман.

Поет тата журналист пулса, Некрасов революцишĕн питĕ те пысăк ĕç туна. Унăн поезийĕ нумай вичкĕн чĕресене вăратнă, унăн журналĕсем революционерсен тата революци майлă çынсен пĕтĕм ăрăвĕсене йĕркене кĕрсе çитме пулăшнă.

Некрасов рак чирĕпе чирлесе 1878 çулти йанварĕн 8-мĕшĕнче вилнĕ. Вăл йăвăррăн, нумай вăхăт хĕн курса вилнĕ. Некрасова пытарни чăн-чăн революцилĕ демонстраци пулса тăнă.

Некрасов хăйĕн ăс-тăнĕн мĕн пур вăйĕпе халăх телейĕпе лайăх пурнăçĕ çинчен ĕмĕтленнĕ. Халăха вађђи телей тата лайăх пурнăç рабочисен класĕ илсе килчĕ, Ленин—Сталин партийĕ илсе килчĕ. Лайăх пурнăçпа савăнăç йуррисем йанăраççĕ ССР Сойузĕн хулисемпе йалĕсенче, çулйĕрĕсем çинче, уйĕсенче, рудникĕсенче тата заводĕсенче. Телейлĕ совет халăхĕ пайан вырăссен аслă поетне Некрасова, хăйĕн творчествипе халăха ирĕклĕхшĕн тата телейшĕн кĕрешме чĕннĕ çынна, асăнса уйавлаť.

(ТАСС).

Н. А. Некрасов тата патша цензури

ЛЕНИНГРАД, (ТАСС). Шалти политикă, культурă тата йала архивĕнче нумай цензурăла „ĕçсем“ хушшинче патша цензурийĕ Н. А. Некрасов тата унăн произведенийĕсем çине мĕнле пăхнине кăтартакан интереслă документсем упранса йулнă. Унăн сăввинче йе статйисенче ирĕклĕх шухăшĕ йе вăл вăхăтри стройăн йĕркесĕрлĕхĕсем çинчен кăшт та пулин асăннă пулсан, цензурă çав произведенисенчен „хăрушă“ вырăнсене, строфасене кăларса ывăтма хушнă.

1856 çул вĕçĕнче цензăр Бекетов Некрасова сăвăсен кĕнеки кăларма ирĕк панă. Халăха çутта кăларас тĕлĕшпе ĕçлекен министерствă вăл ĕç çине урăхла пăхнă, Некрасова сăвăсен кĕнекине пичетлесе кăларма ирĕк паман. Халăха çутта кăларас тĕлĕшпе ĕçлекен министерствă Некрасовăн сăвăсен кĕнекине мĕншĕн пичетлесе кăларма йураманни çинчен цензăрсене вĕрентсе çапла çырнă:

„Çак сăвăсенчен нумайĕшĕ обществăра тĕрлĕрен халапсем сармали сăлтавсем пулса тăма, тата обществă хушшинче киревсĕр шухăшсем пуçарма, тĕлĕнтерме пултараççĕ. Паллах ĕнтĕ, цензурăн йаланах тата пур çĕрте те пытарса хăварнă вырăнсене, халђхи вăхăтри йĕркене айăпласа каланă шухăшсемпе çырнă вырăнсене шыраса тупмала, кашни пĕтĕмпе илсе каланă шухăшрах халђхи вăхăтри йĕркене йурийех айăпласа каланă вырăнсене палăртма, курма пĕлес пулаť. Цензурăн туйăмлă пулмала, витĕр курмала, ăнланса илмеле. Цензурăн хăйĕн публикине пĕлмеле, публикă урăх майлă ăнланма пултаракан йапаласене пĕрне те пичете йамала мар... Çав вăхăтрах, çак кĕнекере лайăх мар, киревсĕр сăвăсем пуррине ним шухăшламасăрах курма пулаť. Вĕсене вуласа тухсанах, пичете йама йурăхлă маррине аван ăнланса илме пулаť. Сăмахран, „Сăпка йурри“ сăвă çавнашкал.

Ăна 1846 çулта пирвайхи хут „Петербургри сборникре“ пичетлесе кăларнăшăн цензурăна йатланă, çавăнпа та ăна аслă пуçлăхсем ирĕк памасăр тепĕр хут пичетлеме йураман...“

Упранса йулнă „ĕçсенчен“ пĕри Некрасов сăввисен кĕнекине хăйĕн паллă сăввисене—„Чукунçул“ тата „Сăпка йурри“ йатлă сăвăсене хушса кĕртмешкĕн ирĕк пама ыйтнине пăхса тухни çинчен кăтартакан документ. Çав ыйтупа пĕрлех цензурă комитечĕ Некрасовăн сăвăсен кĕнекине уйрăм сăвăсене, естрадăра вуласа памали сăмахсене кĕртме йураманни çинчен çырнă „ĕçсем“ те пур.

Н. А. Некрасовпа Л. Н. Толстой пĕр-пĕрин патне йанă çырусем

(Пичетре пулман).

1874 çулта „Отечественные записки“ журналăн 9-мĕш номĕрĕн страницисенче Л. Н. Толстойăн „Халăха çутта кăларасси çинчен“ статйа пичетленнĕ пулнă.

Çак статйа пирки 1874 çулти октябĕрĕн 12-мĕшĕнче Н. А. Некрасов Л. Н. Толстой патне çыру çырнă, унта вăл çакна пĕлтернĕ:

„Кăштах тăхтанă хыççăн, сирĕн статйана епĕ пичетлерĕм, çырса пĕлтеретĕп сире, пур сотрудниксем те ăна пĕр кăмăллăн мухтаççĕ тата хапăл тăваççĕ. Петербург публики вуламасť, вулаť пулсан та, шарламасť. Сирĕн статйа мана питĕ килĕшет, епĕ шутлатăп, халăха çутта кăларас ĕç вырăссен халђхи чи кирлĕ ĕçĕ пулса тăраť, есĕр уншăн тăрăшатăр“.

Çак çыру çине ответлесе Л. Н. Толстой Н. А. Некрасов патне çапла çырнă:

„Милостивый государ Николай Алексейевич!

Манăн статйа сире тата „О. З.“ („Отечественные записки“—ред.) пĕтĕм редакцине килĕшнĕшĕн питĕ савăнатăп, унпа килĕшсе, халăха çутта кăларас ĕç çине çавăн пек пăхни çине чиновничествă тата мăка шухăшлисен йенчен пулма пултаракан тапăнусенчен редакци хӳтĕлеме шухăшлĕ тата хӳтĕлеме пултарĕ тесе, епĕ шансах тăратăп...

Сире питех те хисеплекен тата чĕререн парăннă Гр. Л. Толтой.

1874 ç. нойабĕрĕн 4-мĕшĕ“.

АСĂРХАТТАРНИ: Ку материала ССРС Наукăсен Академийĕн литературă Институчĕ Н. А. Некрасова хисеплесе кăларма пичете хатĕрленĕ „Литературный Архив“ сборникрен илнĕ.

Аслă поета асăнса

Вырăссен аслă поечĕ Н. А. Некрасов вилни 60 çул тултарнă йатпа Шупашкарти хаçат шкулĕнче литературă вечерĕ иртереççĕ.

Вечерта Некрасовăн пурнăçĕпе творчестви çинчен доклад пулаť. Л. Семенов, Т. Миронов, В. Давыдов т. ыт. студентсем поетăн сăввисене вуласа параççĕ.

Кунсăр пуçне йатарласа литературă журналĕ тата стена хаçачĕ кăлараççĕ.

П. Лукойанов.

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Лебедев художник Н. А. Некрасовăн „Размышление у парадного подъезда“ сăвви вађђи тунă иљђустраци (1877ç.).
„Тухса тăчĕ швейцар.—Кӳртсем, теççĕ шанчăкпа асапа палăртса“...
Сойузфото репродукцийĕ.

С. МИНЕЙЕВ.

ПИРĔН ПОЕТ

I.

Некрасов хăйĕн йурри-сăввисенче, поемисемпе сатирисенче халăхăн тăванса, кӳтсе çитнĕ ăш-чикĕ çинчен, хулари ĕрешмен картилĕ, йӳрленсе тăракан кĕтессенче, йалта çилпе чĕтресе ларакан чалăш-чĕлĕш пӳртсенче хăйсен кунçулĕсене кун çути курмасăр пурăнса иртерекенсем çинчен, вĕсем хăйсене асап кăтартакан тискер кайăксене курайммасăр йунаса пурăнни çинчен çырнă.

Вырăссен аслă поечĕсенчен пĕри вилес умĕн темиçе кун маларах „О, Муза! я у двери гроба“ йатлă сăвва çырнăранпа утмăл çул иртрĕ. Калама та çук пысăк улшăнусем пулса иртрĕç çак çулсенче. Пирĕн çĕршыври ĕççыннисем етем йăхĕ темиçе ĕмĕр хушши ĕмĕтленсе пурăннă ĕмĕте ĕçе кĕртсе, кĕлмĕç, улăм Российĕнчен социалисăм çĕнтерĕ мухтавлă тăван çĕршыв туса лартрĕç. Кĕлмĕçлĕ Российăпа пĕрлех Некрасов сăввисенче, йуррисенче шăранакан хурлăх, халăх хĕн-хур айĕнче „йăнăшасси“ нихăçан кайала çаврăнмала марах иртсе карĕç. Совет çĕршывĕ тулăхлă та савăнăçлă пурнăç турĕ.

Çав тери пысăк улшăнусем хыççăн Некрасов çырнисем пирĕн чĕресене хумхатма пăрахрĕç-и? Поет вилнĕренне иртнĕ утмăл çул ун сăн-сăнатне, кăшт та пулин тĕксĕмлетри? Çук! Ун йурри-сăввисем пайан кунччен чĕрене витĕрех тивеççĕ. Халăх ăна çулран çул ытларах йуратса пыраť, ун кĕнекисене мĕлйуншарăн кăларса тăраť, вăл çырнисенчĕ телейлĕ пурнăç тăвакан 170 мĕлйунлă халăх хăйĕн ĕмĕрхи кунне кураť, унăн никăçан манми сăнлăхĕсенчен çĕнĕ кĕрешӳсем вађђи вăй-хал илсе тăраť, халăх тăшманĕсене чĕререн курайммасăр пурăнма, вĕсен ирсĕрлĕçĕсене тăрă шыв çине кăлармa вĕренет.

Литературă таврашĕнчи „вата хĕрсем“ çапла шутлаççĕ: Некрасов хăйĕн сăввисене илемлĕ çырассишĕн, сăвва тул йенчен илемлетесшĕн тăрăшман, мĕн пурĕ те ăш-чикĕшĕн çеç, хăйĕн ирĕклĕ шухăшĕсене сăвăласа парасшăн анчах тăрăшнă, теççĕ. Вĕсем шучĕпе поези тăвас пулсан сăрт айĕнчи лапамсем, кăтра хурăнсем, савнин ачашĕ çинчен çеç çырмалă.

Пуриншĕн те паллă, епĕр Некрасов сăввисене лайăх çырнă пирки йуратса вулатпăр, вĕсем пире ăш-чикĕ [illegible]ĕлĕшĕнчен те, тулашĕ йенчен те илемлĕ çырнă пирки килĕшеççĕ, çавă ĕнтĕ чĕрене витерет. Поет кĕрешнĕ те çырнă, кашни сăвалă йĕркене чĕре хĕрӳлĕхĕпе ăшатнă.

II.

Некрасов пырас çул чечексем пăрахса тухнă çул пулман—тумхахлă та йăвăр çул пулнă. Поет йалта ӳснĕ. Ашшĕ тăнккам, сĕмне пĕлмен усал çын пулнă. Вăл хăй аллинчи хресченсене, хăйĕн кил-йышне тискеррĕн пусмăрласа тăнă.

Поет ашшĕ тытса тăнă йал Атăл çывăхĕнче арестантсене Çĕпĕре хăвалана Владимир çулĕ çинче пулнă. Çавăнпа Некрасов патша Российĕн „ырлăхĕсене“ çамрăклах курнă. Пĕр хутчен Атăл хĕрринче сӳренĕ чух пулае поет бурлак: „ыранччен вилсе выртсан питех лайăхчĕ“, тенине илтнĕ. Вăл тĕлĕннĕ, анчах мĕн пирки çапла пулнине тавçăрса илеймен. Кайарахпа вăл вырăс çирĕп аслă шывĕ çинче кам йынăшнине курнă, вăл сасса йынăшаканĕсем йура тенине илтнĕ.

Паллах, ун чухне Некрасов аслă çĕршыв пĕтĕмĕшпех хĕнхур айĕнче йынăшнине пĕлме пултарайман. Вăл ашшĕ тытса тăракан йалта, йал çывăхĕнче мĕн пулса иртнине анчах курса тăнă. Халăх йынăшнă, вăл хурлăхлă сасă Çĕпĕр çулĕ çинче сăнчăрсем чăнкăртатнипе пĕрлешнĕ. Ку çеç те мар. Поет хăйĕн ашшĕ çынсен пурнăçне телейсĕрлетнине те лайăххах курса тăнă. Унăн амăшĕ те чĕререн тарăхса пурăннă. Çамрăк Некрасов çу кунĕсенче амăшĕпе час-часах йăвăç пахчине тухнă та, амăшĕ ачине ыталаса макăрнă. Ывăлĕ амăшĕ мĕншĕн макăрнине лайăх пĕлнĕ.

„Савăнăç чашăкĕнчен епĕ кăпăкне çеç ĕçрĕм“, тет поет Некрасов. Чăнах та ĕнтĕ, савăнăçпа аса илмели нимĕн те пулман. Çавăнпа вăл таврана йĕрĕнсе пăхаť, хăйсен хуçалăхĕ йухăннăшăн: вăрманĕсем çарана йулнăшăн, уй-хирĕсем ĕнсе кайнăшăн хĕпĕртет. Кайарахпа хăйĕн чунĕ кӳтнипе „Родина“ сăвăра çыраť:

„И вот они опять, знакомые места,
Где жизнь отцов моих, бесплодна и пуста,
Текла среди пиров, бесмысленного чванства
Разврата грязного и мелкого тиранства“.

Çапла ĕнтĕ, халиччен мухтав йурри çеç илтнĕ дворйансен кил вырăнĕ Некрасов сăввисенче тĕксĕмленет. Пурнăç хăйĕн сăн-питне кăтартмалипех кăтартаť. Поет хăйĕн класĕнчен тăрăхласа çырма тытăнаť.

III

Вунçичĕ çулхи Некрасов ашшĕ килĕнчен Питĕре тухса кайаť. Унта вăл пĕр пус укçасăр, роман алçырăвĕпе, сăвăсемпе пырса кĕрет. Выçлăн-тутлăн çапкаланса çӳрет вăл тул йенчен йалкăшакан дворйансен Питĕрĕнче. Ăна çынсем сĕтелĕ çинчи сыртăксене çисе çӳреме тивет. Пурнăç ачашласа тăмасť. Некрасов пуйса мухтава тухасси çинчен, тутă хырăмпа пурăнасси çинчен ĕмĕтленет. Анчах Российăри пурнăçăн тӳнтерлĕш йенне лайăх пĕлни Некрасова пуçпех урăх çулпа илсе кайаť.

Некрасова политик тĕлĕшĕнчен кам ӳстерсе çитĕнтернине лайăх пĕлетпĕр епĕр, вăл пурнăçа лайăх пĕлнине, ун чухнехи пурнăçри çивĕч хирĕçӳсене политикăла ăс-тăнлăх патне çитерес çĕрте мĕнле пулăшу парса пынине те лайăх пĕлетпĕр. Некрасова вĕрентекенсем Российăра демократилĕ вĕрентĕвĕн никĕсне хывакансем, ăна йертсе пыракансем: Белинский, Чернышевский тата Доброљубов пулнă. Революцилĕ демократсем Некрасова нумай пулăшнă. Вĕсенчен поет революцилĕ малашлăха курса тăма вĕреннĕ.

Ĕçе пуçарса пыраканĕ Белинский пулнă. Йулташĕсем, чăн-чăн тусĕсем питех те сахал пулнă ун. Вилнĕ хыççăн сăва çинче ăна пытарнă вырăн та çухалса кайма пуçланă. Ахалтен мар, Некрасов „О погоде“ сăввинче сăва çинче калама та çук паллă критика пытарнă вырăна шыраса çӳрени çинчен çыраť. Çав вăхăтра дворйан революционерĕсен сахал йышĕ вырăнне демократ-революционерсем йышлăланма пуçланă. Белинский хыççăнах Чернышевскийпе Доброљубов Российăри демократсен çулпуçĕ пулса тăнă.

Некрасов иккĕленнĕ, унсăр пулман. Дворйансен ретĕнчен тухса, авалтанпа хăнăхнă пурнăçпа çыхăнса тăракан кăвапасене татса революцилĕ вăйсем йенне тăрасси, вак-тĕвек, татăк-кĕсĕк вăйсем пĕтĕççе пынă чухне тăшманла хӳмесем урлă каçасси асаплă, йăвăр йапала. Çавăнпа Некрасов тепĕр чухне кайала та туртăнкаланă, çилĕлĕ, хурлăхлă музăна пăрахса йăваш, лăпкă сăвăсем, тăшмана каçаракан сăвăсем çырма тытăннă. Ун пек чух поет вырăс хресченĕсен кайа йулнă пайĕн чуралăхпа, христианствă тĕнĕпе пусăрăннă шухăш-кăмăлĕнчен те çулте тăман.

„Еще один поход на демокрадию“ статйинче (XVI-мĕш том, 132 стр.) Ленин тӳрех калаť:

„Хăй çирĕп пулманнипе Некрасов Чернышевскипе либералсем хушшинче чӳкеннĕ, анчах çапах та унăн пĕтĕм кăмăлĕ Чернышевский йенче пулнă“. Ахалтен мар, Некрасов вилес умĕн вăл вăхăтра Çĕпĕрте ссылкăра пурăннă Чернышевский инçетрен Пыпин патне çапла çырнă:

„Есĕ ман çырăва илнĕ çĕре Некрасов сывлама чаранмасан, кала ăна, епĕ вăл çынна чĕререн йуратнă, ăна ман çине кăмăлпа пăхнăшăн тав тăватăп, чуп тăватăп ăна, унăн мухтавĕ ĕмĕрлĕхех пырасса, вырăс поечĕсенчен чи генилĕ тата чи ырă поетне Российă ĕмĕрех йуратасса хыттăн шанса тăратăп епĕ, уншăн (Некрасовшăн—С. М) татăлсах йĕрететĕп. Вăл чăн-чăнах питех те ăслă çын пулнă, поет пулса вăл, паллах, вырăс поечĕсенчен пуринчен те çӳлерех тăраť“.

Некрасов революци тума çĕкленекен хресченсен поечĕ, хресчен демократийĕн поечĕ пулнă пирки Чернышевский ăна çӳллĕ вырăна лартнă, çавăн пирки ĕнтĕ „пуринчен те çӳлерех тесе йăнăш тунă. Апла пулсан та, вырăссен аслă демокрачĕ çырнинче тĕрĕсси нумай.

Ленин хресчен икĕ чунли çинчен, унăн ĕçчен чунĕ тата харпăрлăх тытаканăн чунĕ пурри çинчен каланине пурте пĕлеççĕ ĕнтĕ. Тимлĕн пăхма пĕлекен куç Некрасов вăхăтĕнчех йал, хресченсем икке уйăрăлса пынине курма пултарнă. Çав кĕрешӳре Некрасов крепосной йĕркесене те, капиталисла стройăн ирсĕр йенĕсене те хирĕç тухаť. Вăл хулари нимĕнпе те паларса тăман çынсен пурнăçĕ çинчен, мешченсем çинчен, аластипе тăранса пурăнакансем çинчен çыраť. Пусмăр айне кĕрсе ӳкнĕ етемĕн йăвăр пурнăçĕ çинчен Достойевский пек тем тери пысăк писател те çырнă. Анчах вăл парăнма, лăпланма чĕннĕ, етем хăйне хăй ним вырăнне те ан шутлатăр, тесе вĕрентнĕ. Некрасов лăпланма чĕнмест, вăл парăнас шухăшлă мар Чернышевский хресченсене пуртытма чĕннĕ хыççăн, вăл кĕлмĕçлĕхпе пуйанлăх хушшинчи нихăçан лăпланмала мар хирĕçӳсене татах та тарăнрах кăтартса параť, хăйĕн сăввисемпе поемисенче кĕлмĕçлĕхре асап куракансен, кĕвĕçекенсен, çиллине шăнарайман çынсен сăнлăхĕсене кăтартаť („Еду ли ночью по улице темной“ сăвă).

Некрасовăн хресченĕ темĕн тери асапра та пуçа усса тăмасť. Тепĕр чух вĕсем чĕлхесĕр пек чĕнмеççĕ, йурăсем йурлама пăрахаççĕ, час-часах хĕрарăмсем пит-куçĕсене тутăрпа пĕркесе лартаççĕ, сайра-хутра вăрăмăн сывлани илтĕнет. Анчах алла усмаççĕ вĕсем. Орина—салтак амăшĕ те аллине усмасť, декабристкăсем те паттăрла ĕçсем тăваççĕ, Прокл Çевастйанăч арăмĕ Тарйе те упăшки вилнĕ хыççăн ачи-пачисемпе çеç тăрса йулнăскер, пуйан пурнăç тăвасси çинчен ĕмĕтленет. Çав вăхăтрах Некрасов хресченĕн вăхăтлăха пурнăçĕ çитни те йаланлăха маррине, пайан мар пулсан ыран ишĕлсе анма пултарнине кăтартса параť, кулаксене чунтан курайммасť.

Поет фабрик-заводсем ӳснине те, вĕсенче çынсем иртен пуçласа сĕм çĕрлеччен ĕçленине те, ачапăчасен вăйĕпе тискеррĕн усă курнисене те курман мар. Вăл ун çинчен те çырна. Çав вăхăтрах поет капиталисăм ĕмĕрех тытăнса тăрас çуккине питех те уççăн кăтартаť. („Чукунçул“ сăвă).

Некрасов революци тума çĕкленекен хресченсен поечĕ пулнă терĕмĕр епĕр. Апла пулсан, вăл çырни—пролетариат йертсе пыма тытанса çĕнтерӳ патне илсе пынă революцин пуçламĕш шухăшĕсене, ĕмĕчĕсене уççăн кăтартса паракане пулнă. Çавăнпа Некрасов пирĕн поет. Некрасов пĕтĕм ăшчикĕпе, ĕмĕчĕсемпе, пултарулăхĕпе пирĕн. Унăн поезийĕ революцишĕн, пĕр çавăншăн çеç шăраннă.

Некрасов кĕнекисен ĕлĕкхипе халĕхи раскалĕ

Пирĕн çĕршыври тĕлĕйлĕ те хаваслă пуйăн пурнăçпа пурăнакан ĕçсыннисем вырăссен поечĕ Н. А. Некрасов вилни утмăл çул тултарнине пысăк уйăв туса паллă тăваççĕ. Унăн çулăмлă, ирĕклĕхшĕн çапăçма чĕнекен сăввисене йуратса вулаççĕ. Вăл çырнă произведенисене пичетлĕсе кăларасси çултан çул ӳссе пырат.

Ĕлĕк, патша Российĕнче, çирĕм çул хушшинче, 1897 çултан пуçласа 1916 çула çитиччен, Н. А. Некрасовăн произведенийĕсене 194 пин тиражпа 17 кĕнеке çеç кăларнă. Ана та вырăс чĕлхипе çеç кăларнă. Ун чухне ытти чĕлхесене куçарасси çинчен шутламан та.

Патша правителстви Некрасовăн питĕ нумай сăввисене пичетлесе кăларма ирĕк паман. Цензура патша стройне питлекен йĕркесене кăларса пăрахса, произведенисене пăсса пĕтернĕ.

Аслă социалисăмла револуци пулни çирĕм çул тултарнă тĕле Некрасовăнне 5.409.000 тиражпа 165 кĕнеке кăларнă. Вăл хисеп унăн йубилей йачĕпе кăларакан кĕнекесемпе тата та ӳсет. Вырăсла çеç мар, Совет Сойузĕнче пурăнакан ытти халăхсен чĕлхисемпе те нумай пичетленеççĕ.

Некрасовăн произведенийĕсем социалисăм çĕршывĕнче çеç хăй çырнă текст тăрăх пичетленме пуçларĕç.

Некрасова унăн современникĕсем мĕнле хакланă

В. Г. БЕЛИНСКИЙ

Хăвăр поет тата чăн-чăн поет иккенне пĕлетĕр-ши есĕр?"
(И. Панайев аса илнинчен).

Н. Г. ЧЕРНЫШЕВСКИЙ

„Кала ăна, епĕ ăна хĕрӳлĕн йуратрăм, вăл ман çине ыррăн пăхнăшĕн епĕ ăна тав тăватăп, епĕ ăна чуп тăватăп, епĕ ĕненетĕп: унăн мухтавлăхĕ вилĕмсĕр пулĕ, Российă ăна, мĕн пур вырăс поечĕсенчен чи ыррине тата чи пултарулине, ĕмĕр-ĕмĕрех йуратĕ".
(Пыпенин патне çырнă çыруран).

Н. А. ДОБРОЛЮБОВ

„... Есĕр, вырăссен чи йуратнă поечĕ, пирĕн поезири ырă пуçарусен представителĕ, халĕхи вăхăтра вăйпа пурнăçа тытса тăракан пĕртен пĕр талант..."
(Н. А. Некрасов патне çырнă çыруран).

Г. И. УСПЕНСКИЙ

„Вăл тĕлĕнмеле çын. Епĕ унпа хумханмасăр калаçма пултараймастăп... Мĕн çыратпăр-ши ĕнтĕ епĕр? Мĕн тума?.. А вăл вара... Пĕрре пăхсах пĕтĕм чун-чĕрене çавăрса лартат. Ăшра мĕн пурри пĕтĕмпех ĕçлеме тытăнат".
(Починковскайа аса илнинчен).

Йа. П. ПОЛОНСКИЙ

„Поет та гражданин, тивĕçлĕх ун—вĕрентессн,
Çĕтĕк-çатăклăхра чĕрĕ чуна курасси,
Хĕнхурти паттăрсене йуратасси,
Хытă чĕрелисем çине тарăхасси".

Некрасов пулнă вырăнсенче

(ТАСС спецкорĕнчен)

ГРЕШНЕВО

Ача чухнехи кунçулне вырăссен аслă поечĕ Н. А. Некрасов хăйĕн ашшĕн имениче — Йарославл губернинчи Грешневора пурăнса иртернĕ. Грешнево илемлĕхне вăл „Уныние" сăвăра çырса кăтартнă. Кайарахпа, столицăра пурăннă чухне, Некрасов час-часах ашшĕсен „йавине" пыра-пыра кайнă. Питех те хĕрӳлĕ ухутник пулнă майĕпе, вăл кунĕ-кунĕпе пăшал çĕклесе Грешнево таврашĕнче çӳренĕ. Поет çывăхри пур йалсенче те пулнă, хресченсен йăвăр та хĕнхурлă пурнăçне сăнанă.

Халĕ Грешневора—Некрасов йачĕпе тăракан колхоз. Некрасовсен килтаврашĕнчен вата çăкасем кăна кăштах тăрса йулнă. Октабĕрччен кăшт маларах имени темĕнле Титов аллине куçнă. Некрасовсен çуртне çĕмĕрнĕ, ун вырăнне çĕнĕ çурт туса лартнă. Вăл çурта халĕ колхозăн обществăлă организацисем вырнаçнă.

Поетпа пĕр вăхăтра пурăннă çынсем çук. Виç-тăват çул кайарах Некрасов современникĕсен йулашки, Некрасов ашшĕн крепостной çынни—Николай Орестович Сорокин вăтăлса кайнипе вилнĕ.

Кашни колхозник çуртĕнче тенĕ пекех Некрасов портречĕ çакăнса тăрат. Колхозниксем лартнă çамрăк йывăçсем çавăрса илнĕ вата çăкасен — поет современникĕсен хушшинче Некрасов йачĕпе тăракан çĕнĕ клуб çуртне туса лартнă.

Поет хăйĕн сăввисенче хӳтĕленĕ çынсен правнукĕсем поетăн йубилейне уйăвлаççĕ. Драм кружокĕ çĕнĕ спектакл хатĕрленĕ. Колхоз артисĕсем ăна савăнăçлă вечĕрта лартса кăтартаççĕ.

КАРАБИХА

Йарославлрен 14 километрта, Мускава кайакан шоççе çулĕ çинче — Некрасовăн заповедникĕ, Некрасовсен ĕлĕк пулнă имениĕ—Карабиха. Кунта вырăссен аслă поечĕ хăйĕн чи лайăх произведенийĕсене çырнă.

Карабихăри флигĕлсенчен пĕринче халĕ поетăн тăванĕсем, унăн шăлнĕн Федорăн хĕрĕсем—Йелизавета Федоровна Белзева-Некрасова тата Анастасийа Федоровна Некрасова пурăнаççĕ.

Урама тӳрех тухакан крылцине йуртан хырса тасатнă. Малти пӳлĕм. Унтан иртсен тата кивĕ пукан сĕтелсем лартса тухнă пысăк пӳлĕм. Хăнасене виçĕ карчăк кĕтсе илеççĕ. Кайарахпа тата çакă палăрчĕ: ирхине ирех çуртра пурăнакансем патне хăнана вĕсен йăмăкĕ—поетăн виççĕмĕш тăванĕ Вера Федоровна Андрейева килнĕ пулнă.

Пӳлĕмре—поетăн, унăн тăванĕн Федорăн тата Лев Толстойăн портречĕсем. Стена çинче пысăк рамă ăшĕнче — Некрасовăн вилес умĕнхи портречĕ.

69 çула çитнĕ Йелизавета Федоровна поета лайăххăх асра тытат. Унăн йăмăкĕсем çамрăкрах, çавăнпа Некрасова курман. Йелизавета Федоровна хăй аса илнисене калаçа парат.

—Йулашки хут мучийе епĕ çичĕ çулхи хĕрача чухне курнă. Нумай йĕшне маннă ĕнтĕ. Вăл килес умĕн (вăл çуркунне пычĕ) епĕр апат çисе ларатăмăр. Атте кĕтмен çĕртен савăнăçлă çĕнĕ хыпар пĕлтерчĕ: „Ыран мучи килет". Ирхине, кăшт çутăлсанах, ачасем ура çинче чупса çӳреме тытăнчĕç. Епĕр пурте ăна питĕ йурататтăмăр.

Шăнкăравсен сасси йанраса кайрĕ. Епĕр урама чупса тухрăмăр. Пирĕн пата екипаж çитсе кĕчĕ.

Çул хыççăн кансан, шлафок тата йермолкă тăхăнса мучи парка уçăлса çӳреме тухрĕ. Епĕр йавăçсем хыçĕнче тăрса, вĕсем çӳренине сăнарăмăр. Кайран пирĕ мучи хăйĕн флигелне чĕнчĕ, вăра питĕ те интереслĕ тĕрлĕ калаçусем пуçланчĕç.

Тепĕр кунне Николай Алексеевич ухутана кайрĕ. Халĕхи пекех вăл тавăрăннине астăватăп. Ывăнăскер вăл пӳрте кĕчĕ. Ун хыççăн питĕ те нумай тытнă кайăксене çĕклесе пыраççĕ.

... Поет Карабихăна тепĕр чухне килни асрах тăрат. Хĕлле. Вăл пирĕн пӳртрех чарăнчĕ. Вĕсем аттепе пĕрле пĕр кунлăха Йарославле кайатчĕç. Каçсерен атте кабинетĕнче пĕтĕм çемйе пухăнатчĕ. Кăмакара (каминра) йывăç çунатчĕ. Çыру сĕтелĕ çинчи икĕ çурта аслă кабинета аран аран çутататчĕç. Вăл вăхăтра кăраççин ламписем пулман-ха. Кăмака умĕнчи пукан çинче ларса хăйĕн асра пур сăввисене каласа паратчĕ...

Поет тăванĕсем пурăнакан флигеле Некрасов вилсен туса лартнă. Халĕ вăл çурта поет тăванĕсене ĕмĕрлĕхех панă. Йарославл облĕçтăвкомĕ хушнă тăрăх, çурта çĕнĕрен йусаса лартнă.

Йелизавета тата Анастасийа Федоровнăсем—пенçионеркăсем.

БОСОВО

Босово, Огарки, Шишолово, Богородск тата ытти йалсем Йарославл хулинчен 40—50 километрта. Вĕсем Болшесолский районри Буденный йачĕпе тăракан колхоза кĕреççĕ. Колхоз пысăк уйĕсенче çĕрулми нумай лартса тăват.

„Çаплă пулчĕ çара пушхир
Çĕрулми уйхирĕ...
Унтах „Бабанский" монастыр,
„Большие Соли" йалĕ...", тесе çырнă Н. А. Некрасов „Вата Намăн хуйăхĕ" йатлă сăвăра. Поет çак монастыр çинчен ăнсăртран мар асăннă. Ĕлĕк Большие Соли йал таврашĕнели çĕр талкăшĕ пĕтĕмĕшпе пекех чирĕк алличе пулнă. „Таса аттесем" чирĕк çĕрнехресченсене тара парса чухăнсене експлоатациленĕ.

Халĕ Буденный йачĕпе тăракан колхозăн ĕмĕрлĕхе илнĕ çĕр лаптăкĕ пин гектар; банкăра 32 пин тенкĕ укçа выртат. Стариксем çеç Йаким Нагай пурăннă асаплă вăхăта аса илеççĕ:

„... Суха вăл тытрĕ.
Шăп вăтăр çул пиçетçке вăл—
Ана çинче хĕвелпеле,
Сӳре хыçне тăрат вăл
Хăтăлат çăмăртан,
Пурнат—сухапа тăрмашат..."

Халĕ шкула çӳрекен 9 çулхи ачаран—Босов йалĕнчи колхозник ачинчен: „мĕн вăл суха", тесе ыйтсан,—„пĕлместĕп", тесе ответлерĕ. Ун вырăнне шкулта вĕренекен ачасем трактор, тăвата касăлă плуг тата автомобил çинчен лайăх пĕлеççĕ. Колхоз уйĕсенче суха-ака ĕçне Болшесолский МТС туса парат. Некрасов пурăннă вырăнсенчи йалсем халĕ пуйан пурăнаççĕ. Босово йалĕнче 64 кил, улăм витнĕ кил пĕре те çук. Тимĕр витнĕ çуртсем нумай.

1937 çулта колхозниксем вăйлă тырпул туса илчĕç. Вĕсем государствăна çĕрулми 17 пин тенкĕлĕх планран ытлашши тултарса панă. Ĕçкунĕ шучĕпе илнĕ çĕрулмине чылай колхозниксем тĕрлĕрен хуласенче нумай сутнă. Хуласенчен вĕсем сăмаварсем, патефонсем, арăмĕсемпе ачасем валли çĕнĕ кĕпе-йĕмсем, хăйсем валли—коçтумсем илсе таварăннă.

Босово йалĕнчи ĕлĕкхи пуйан çуртĕнче халĕ клуб. Драмкружок унта пйесăсем вылйаса парат. Большие Соли йалĕнчен кунта час-часах куçса çӳрекен кинокартинăсемпе механик килсе кайат.

Босово йалĕнче Некрасова чаплăн хисеплеççĕ. Колхозниксем—ваттисенчен пуçласа пĕрремĕш класра вĕренекен пĕчĕк ачана çитиччене—пурте поет çинчен аван пĕлеççĕ.

Босово йалĕнче пурăнакансем иртсе çӳрекенсене Йаким Нагай кил-çурчĕ ларнă вырăна кăтартаççĕ. Вăл çурт 59 çул кайарах йалпа пĕрле çунса кайнă. Босово халĕ уйăва хатĕрленет.

А. Морозов.

Йарославл облăçĕ, Босово, Карабиха, Грешнево йалĕсем.

Горьки йачĕпе тăракан шкулта пĕрремĕш класра вĕренекен отличниксем çĕнĕ çул йолкинче. Йолкăра вĕсем пурте премисем илчĕç. (Шупашкар хули).

Цыганов фото-укерчĕкĕ.

ПĔР УРОК

Парти Обкомĕ çак кунсенче Патăрйел районĕнчи парторганизаци пухăвĕн ĕçĕсене пăхса тухрĕ.

Декабĕрĕн 27-мĕшĕнче Патăрйел районĕнчи парти организаци пухăвĕ „Чăваш Коммунĕпе" „Октабĕр йалавĕ" хаçатсенче районри парти руководстви çинчен çырнă статйисене сӳтсе-йавнă. „Чăваш Коммунĕнче" тухнă статйара парти райкомĕн руководстви пирки ыйтăва çакăн пек лартнă: „Парти райкомĕн руководстви — болшевикла çирĕп, халăх тăшмансене — буржуалă-националисене, троцкиссене, бухаринçăсене тата тĕрлĕ йышши икĕпитленекейĕсене тĕпĕ-тымарĕнех тата пĕр хĕрхенмесĕр кăкласа пыракан алăра пулмала".

Районри пуху, хаçатсем çинче тухнă статйасенче кăтартса панă фактсем хыççăн кайса районти пĕтĕм коммунистсене тăшмансен сăтăрлă ĕçĕсен йулашкисене пĕтерме мобилизацилес вырăнне, тĕрĕс çул çинчен пăрăнса, пĕтĕм ыйтăва райком секретарĕ Черновпа „Октабĕр йалавĕ" хаçат редакторĕ Йаковлев çинчен тăракан ыйту туса тавлашу çулĕ çине тăнă. Йулашкинчен, „Октабĕр йалавĕ" хаçат редакторне Йаковлев йулташа вырăнтан кăлармала тунă.

Асăннă статйасенче райком руководствине мĕншĕн айăпланă-ха? Вăл статйасенче парти райкомне, вăл тăшмансем налог политикине пăсса пĕтернисене, колхозсенче пусуçавăрăнăшсене пăтраштарса пĕтернисене, вылăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе сийĕн тунисене т. ыт. вăхăтра тăрă шыв çине кăларса пĕтерменшĕн, сăтăрла ĕçсен йулашкисене пĕтерес тĕлĕшпе райком ытла та вăраххăн çавăрăнкаланишĕн айăпланă. Паллах, парти пухăвĕн ыйтăва çакăнтан тытăнмала пулнă. Çакăн пек тума пысăк сăлтавсем пулнă. Патăрйел районĕнче сăтăрла ĕçсен йулашкисене пĕтерес тĕлĕшпе ĕçсем питех те йапăх тăраççĕ. Акă хăшпĕр фактсем. Крупскайа йачĕпе тăракан колхозра правлени пĕр ларувĕнчех 24 колхознике штрафламала тунă. Унтах авăн çапма йединоличниксене тара тытас тесе постановлени йышăннă, йединоличниксене пĕтĕмпе 3000 ĕçкунĕ тӳленĕ. Хăшпĕр колхозсенче хăйне майлă „отработка" йĕрки туса кăларнă. Колхозниксем ертеллешсе вăрман ĕçлеме çын тара тытса йараççĕ. Район тырпул хатĕрлев планне 95 процент тултарнă, натурплатă тыррине пурĕ те 81 процент анчах нарса татнă. Аш-какай хатĕрлев планне 87 процент кăна тултарнă. Чылай çĕрте вĕренекенсенчен суррине йахăн шкулсене çӳремеççĕ.

Районри пухăвăн задачĕ вăл—районри пĕтĕм партипе комсомол массин сыхăлăхне тата ытларах вăйлатма, болшевисăма вĕренме, партипе комсомолăн пĕтĕм шалти ĕçĕсене вăйлатса йама мобилизацилесси, районри пĕтĕм колхозниксемпе ĕçсыннисене сталинла виççĕмĕш пилĕкçуллăхăн малтанхи çулĕнчи задачăсене ăнăçлăн пурнăçлама мобилизацилесси, суракине болшевикла иртерме хатĕрленес, уйрăмăн илсен, пур çĕрте те лайăх пахалăхлă вăрлăхсем уйăрса хурса пĕтерес, йалхуçалăх машинисене йусаса çитерес. лашасене суракине хатĕрлес ыйтусем тавра чăннипех, социалисăмла ăмăрту организацилес, патшалăх умĕнхи пур парăмсене те тӳлесе татас, тӳрĕ ... йединоличниксене колхоз çулĕ çине çăма йулăшас ыт. ыйтусем тавра мобилизацилесси пулнă.

Ыйтăва çакăн пек сӳтсе-йавмала тăвас вырăнне, райком секретарĕсем, чăн малтан—райком пĕрремĕш секретарĕ Чернов йулташ районри парти пухăвне тĕрĕс мар çулпа, тавлашу çулĕпе пăрса йанă, редакцине, уйрăмăн—унăн редакторне Йаковлев йулташа—вăл райком такçанах палăртнă фактсем çинчен çырат тесе айăплама пăхнă. Ыйту тăшмансен сăтăрла ĕçсен йулашкисене пĕтересси çинчен тăнă. Çакна Чернов йулташ ăнланман тĕрĕсрех каласан, ăнланасшăн пулман. Чăнах та райком пĕр-пĕр участкăри сăтăрла ĕçе палăртат, анчах ун çинчен партин пуçламĕш организацисем пĕлмесĕр йулаççĕ пулсан, мĕн тĕшне тăчĕрха унăн решенийĕсем? Паллах редакци çак ыйтусем тăрăх хаçатсем çинче çырса тĕрĕс тунă.

Анчах хаçатпа унăн редакторĕн, Йаковлев йулташăн, йăнăшĕсене палăртмасăр хăварма йурамаст. Йаковлев йулташ хăйне хăй районри организаци ĕçĕсем айкинче тăракан çын пек хурса, сăтăрла ĕçсен йулашкисене пĕтерес тĕлĕшпе парти райкомĕ умне татăклăн ыйту лартман.

Анчах çакă вăл пĕре те райкома та, унăн секретарĕсене те, парти пухăвне те редактора вырăнтан кăларасси çинчен ыйту лартма, пуринчен ытла—Йаковлев йулташа редактортан кăлармала тума сăлтав паман. Пуху райком секретарне, Чернов йулташа, мĕнле те пулса тӳрре кăларас тесе тăрăшнине сăлтавсăрах редактора вырăнтан кăлармала туни, сахалтан та, болшевикла пичетĕн задачĕсене ăнланманнине, тĕрĕсрех каласан—болшевикла самокритикăна хĕсме тăнине пĕлтерет. Пуху ыйтăва политикла принциплă лартса сӳтсе-йавас вырăнне уйрăм йулташсем хушшинчи тавлашусем туса йани те Патăрйел районĕнчи парти организацинче болшевикла самокритикă сукки çинчен калат, парти организаци Сталин йулташ самокритикă çинчен кăтартса панисене ăнланманни çинчен калат.

Парти Обкомĕ Патăрйел районĕнчи парти пухăвĕн çак ыйту тăрăх йышăннă решенине пĕтĕмпех пăрахăçа кăлармала турĕ. Çакăн пек туни вăл тĕрĕс. Халĕ ĕнтĕ парти райкомĕн çакăнтан хăйне валли урок тумала, унăн работникĕсен политикăла руководителсем пулма пуçтарнине практикăлă ĕçре кăтартмала.

Тракторсене вăхăтра йусас пулат

Вăйлă тырпул туса илесси—суракине йеплĕ хатĕрленнинчен килет. Апла пулсан та, пирĕн республикăри колхозсенче суракине пур йенчен те, тĕплĕн хатĕрленес: вăрлăхсем хатĕрлесе, тасатса хурас, йалхуçалăх машинĕсене йусас, çĕре çемĕçтермели йапаласем хатĕрлес, уйра йур тытас ĕçсем тата агротехникăн хĕллехи ĕçĕсене туса иртересси пачах çителĕксĕр йулса пыраççĕ.

Хăшпĕр колхозсенче ку вăхăта çитиччене вăрлăхсене хывса çитермен. Суртсăр вăрлăхсене суртлă вăрлăхсемпе улăштарма тытăнман. Канаш районĕнчи Катек колхозĕн пăрса, йасмăк вăрлăхĕсем çителĕксĕр. Ку колхозра тулă, сĕлĕ вăрлăхĕсене суртлă тырăсемпе улăштарма пуçăнман. Çавăн пекех, йалхуçалăх машинĕсене йусамасăр выртараççĕ. Хĕрлĕ Чутай районĕнчи „Крестьянин", „Трудовик", „ВКП(б)" колхозсем те ăшă кирлĕ чухлĕ вăрлăх хывса çитермен. Хывнă вăрлăхсене суртласа тасатмаççĕ. Çак асăннă колхозсенче çĕре çемĕçтермели йапаласем те хатĕрлеме тытăнман. Суракине хатĕрленес тĕлĕшпе нумай калаçаççĕ, ĕçне тумаççĕ.

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе парти Тĕп Комитечĕ „Суракине хатĕрленес ĕç мĕнле пыни çинчен" йышăннă постановленире „ кашни машинă-тракторлă мастерскойĕнче тракторсене йусас плансемпе графиксене çĕнĕрен пăхса тухса, тăваттăмĕш квартăлта тумасăр хăварнă ĕçсене йанвар уйăхĕнче туса çитерме тата йусас ĕçсем йулса пынине йăлтах пĕтермеле",—тенĕ. Çавăн пекех тракторсене йусассин пахалăхĕ начар пулнăшăн, ку ĕçре айăплисене хăйар наказани парасси çинчен асăрхаттарнă. Çакна кашни МТСтанцин тивĕçлипе тунса илни кирлĕ.

Халĕ пирĕн республикăри машинă-тракторлă станцисенче тракторсене йусас ĕç пысăк хăрушăлăхра тăрат. 1938 çулхи йанварĕн 1-мĕшĕ тĕлне тракторсене кĕркуннехи тата хĕллехи вăхăтсенче йусас плана республика мĕн пурĕ те 30,4 процент, тăваттăмĕш квартăл планне 71,4 процент çеç тултарнă. Вăрнар, Йĕпреç, Куславкка, Шăхасан районĕсем тракторсем йусассин тăваттăмĕш квартăл планĕсене тултарнă пулсан, çав хушăрах Канаш, Пăрачкав, Тăвăркас, Трак, Йелчĕк районĕсем тракторсем йусассин тăваттăмĕш квартăл планне тултарассипе пачах начар ĕçленĕ. Çавăнпа йусамалла тракторсене йусаса çитерейmen. Шупашкар районĕ пур районсенчен те кайра сĕтĕрĕнсе пырат. Вăл тăваттăмĕш квартăл планне мĕн пурĕ те 18 проц. çеç тултарнă. Йусамалли 37 трактортан 3 тракторне кăна йусанă.

Хăшпĕр машинă-тракторлă мастерскойĕсем тракторсене тата вĕсен уйрăм пайĕсене начар йусаççĕ. Пăрачкав районĕнчи МТС-че йусанă 11 мотортан тăваттăшĕ йурăхсăр пулнă. Кунта мастерскойа хăйĕн ĕçне ытла та йапăх организациленĕ. Сутă çук пирки мастерской кăнтăрла çеç ĕçлет. Инструментсем çитмеççĕ.

Тимĕрлĕхпе савăрнăççăрлăха тĕпренех пĕтерес пулат. Тракторсене йусас, вăрлăхсене хатĕрлес, тасатас ĕçсен пахалăхĕ йеплĕ пулса пынине сирĕп контрол туса тымала.

Халĕ пур колхозниксене тата МТС, МТМ работникĕсене суракине хатĕрленес ĕçĕ сарлакан йавăçтарни кирлĕ. Колхозсен бригадăсен ăмăртуне тивĕçлипе пуçарса, йертсе пырас пулат.

Г. Калинин.

Н. А. НЕКРАСОВ.

ЧУКУНÇУЛ

Ача-пăчасене пиллесе çырнă поемă

Ванйă (кучер тумĕпе): Атте, кам тунă вара ку çула?
Ашшĕ (хĕрлĕ чĕнтĕрлĕ палтопа): Граф Петр Андрейевич Клейнмихел чунăм.*).
(Пуйăс çинчи калаçу).

I.

Кĕркунне пит аван! Уçă та тăрă
Сывлăш ĕшеннĕ вăйа хăпартат.
Хытă шăнман шыв çинчи шĕлкĕш пăрĕ
Ирĕлекен сахăр йевĕр выртат.

Лайăх, тӳшек çинчи пек, сывăрмашкăн
Сĕм вăрман патĕнче—ирĕк, тӳлек!
Ĕлкĕреймен çулçăсем те кушмашкăн—
Сарă та чĕрĕ, выртаç кавир пек.

Кĕркунне пит аван! Сивĕ çĕрсĕмĕ,
Йе шăп, уйартнă кунсем,—
Йĕркелĕх çук таврара! Йывăç тĕмĕ,
Мăклă ушахсем те тункатасем—,

Уйăх çутти айĕнче пурте ырă,
Пур çĕрте те куратăп Руçа...
Хăвăрт вĕçеп хурçă релсăсем тăрăх,
Шухăшсем çаврăнаççĕ пуçра...

*) Граф П. А. Клейнмихел Микулай чукунçулне тунă çĕрте йертсе пынă. Вăл, часрах тата йӳнĕрехе туса пĕтерес тесе, рабочисене катаргăлă условисенче ĕçлеттернĕ. Рабочисем уйăхне виçĕ тенкĕ илессишĕн кунĕн-çĕрĕн ĕçленĕ. Граф Клейнмихелĕн йатне асăннă епиграфшăн çак поемăна пичетлеме чарнă, Некрасовăн вăхăтлăха çак епиграфа кăларса пăрахмала пулнă.

II.

Ашшĕ! Мĕнма тыткăнри пек усратăр
Аслăскерне, Ванйука?
Уйăх çутти айĕнче, ирĕк парăр,
Епĕ ăна кăтартам чăнлăха.

Вăл ĕç, Ванйук, пысăк пулнă, чикесĕр—
Йывăр тума пĕр çынна!
Тĕнчере пур патша: вăл патша пĕр шеллевсĕр,
Выçлăх тейеççĕ ăна.

Вăл тытат çар, çӳретет карапа та,
Плуг хыçĕнчен те йалан вăл çӳрет,
Каменщик, ткач патĕнче те куратăн,
Вăл пухат çынсене пĕр çĕре.

Çакăнти çынсене те вăл пухнă,
Нумайĕш тискер кĕрешӳре
Пурăнăççăр кĕтесе пурнăç панă,
Тупăка хăйсем выртнă кĕрсе.

Тӳп-тӳрĕ çул: питĕ ансăр купиçĕ,
Релсăсем, йупасем, кĕперсем.
Икĕ йенче—вырăс халăх шăммийĕ...
Ванйă, пĕлетни, мĕн чухлĕ вĕсем?

Чим-ха! Хăрушă сассем йанăрарĕç!
Шăл шаккани те чупни илтĕнет.
Шăн-кантăка пĕр мĕлкĕ хупăрларĕ...
Мĕн? Мĕскĕнсен ушкăнĕ!

Йе тек иртеç чукунçул урлă вĕçĕмсĕр,
Йе айкинче тек чупаççĕ вĕсем.
Илтрĕни йурă?.. „Çакă уйăхлă çĕр
Савăк курмашкăн хамăр ĕçе!
Пылчăк чухне, сивĕре те ĕçленĕ,
Ваннă епир тек ĕçне.

Мунчара пурăннă, выçă тертленнĕ,
Шăннă, йĕпеннĕ, хĕн курнă чирпе.

Десатниксем çарататчĕç пĕр мелсĕр,
Пуçлăх хĕнетчĕ, хĕсетчĕ нуша.
Турăçăсем, ĕç ачийĕсем, епĕр
Чăтнă пурне те, пит лăпкă пулса.
Пирĕн ĕçпе, тăвансем, ыр куратăр!
Епĕр вилетпĕр, кĕретпĕр çĕре...
Мĕскĕнсене ыр йатпа асăнатăр
Йе таксанах есĕр мантăр пире?.."
Ванйă, вĕсен йурринчен ан шиклен тин,
Пурте вĕсем мужиксем, сан тăван.
Килнĕ вĕсем çак ĕçе пур йенчен те:
Волховран, Атăлтан, Окаран...
Намăс йĕрме, алсапа хупланмашкăн,
Есĕ ĕнтĕ пĕчĕк мар, пуç ан ус!..
Авă, куратни, тăрат вăрăм пӳлĕ,
Чирпе хыткан, ланнă пĕр белорусс:
Йунсăр тутала, куçĕсем те путланнă,
Типпĕм алли суранлă,
Ав, пĕр майах шыв çинче тăнăран ун
Шыçнă ури; çӳçĕсем сухăрлă;
Ун кăкăрне йышăр ĕç лучăркана,
Вăл кунран-кун сухăтат ĕмĕрне.
Ванйă, ăна лайăхрах асăрха ĕç:
Йывăррăн тупçă çак çын çăкăрне.
Тӳрĕ тăрса нихăçан кураймăн мĕн.
Халĕ те, авă, пит хĕплĕн тăрат;
Кивĕ ломпа вăл катрамăн-катрамăн
Шăннă çĕре йерипен хăйпатат.
Ырă ĕçе йуратма вĕренсессĕн
Иксĕмĕре те нире начар мар.
Халăх ĕçне ырă сун та хал ĕçĕ.
Тăрăп йалан мужике чысламă.
Ан пăшăрхан ес йуратнă çĕршывшăн...
Вырăс ĕçхалăхĕ тӳснĕ найтах,
Çакă чукунлă çула та вăл хывнă
Турă хушнине вăл тӳсĕ йалтах...
Тӳсĕ йалтах—вăл вара уçă аслă
Ирĕк çулне те хăй кăкăрĕпе.
Шел, çав аван вăхăтра пурăнмашкăн
Иксĕмĕре те май килмĕ пире.

III

Çав вăхăтра шăхăрни илтĕнейрĕ.
Пĕтрĕç таçта саланса мĕскĕнсем...
„Тĕлĕнмеле тĕлĕк куртăм еп",—терĕ.
Ванйă: „пĕр пилĕк пин пур, мужиксем,
Вырăс йăхĕн, ăраттин сынĕсем,
Тухрĕç умма...—Вăл каларĕ вара:
— Акă вĕсем—çак çула тăвакансем!"
Кулчĕ шăл витĕр хайар генерал.
— Ватиканра*) хал анчах епĕ пултăм,
Колизейре**) те çӳрерĕм ик каç,
Венăн Светуй Стефанне***) епĕ куртăм,—
Çавсене йăлт халăх тунă-и-ха?
Кулнăшăн есĕр мана пит ан вăрçăр,
Шухăшăр сирĕн пĕртăк çыхăнмаст.
Йе сирĕншĕн Аполлон Бельведерский****)
Кăмака чӳлмекнĕ те тăмаст?
— Çакă паха çуртсене, мунчана та
Йăлт çĕмĕреççĕ вĕт сирĕн çынсем!
„Еп сире мар, Ванйăна вĕт калатăп"...
Калаттрамаст генерал хирĕçле.
—Сирĕн славйан, англо-сакс тата нимĕç.

*) Ватикан—Римри папă пурăнакан дворец. Вăл дворецра пысăк художствăлă хаклă йапаласем упранаççĕ. Унти пин ытла пӳлĕме художествăлă произведенийĕсем йышăнса тăраççĕ. Ватиканра картинсен галлерейĕсемпе музейсем нумай.

**) Колизей—авалхи Римăн чи пысăк амфитеатрĕ, Римри чи илемлĕ çуртсенчен пĕри.

***) Светуй Стефан—Венăри чи пысăк собор.

****) Аполлон Бельведерский—Грецире хĕвелĕн мификăлă турри пулнă. Кайарахпа Аполлон култне Рима та куçарнă. Искусствăра Аполлона ӳкернисем питĕ нумай. Ватиканра Аполлон Бельведерскийĕн чаплă статуйĕ упранат. Вăл статуйăна XV-мĕш ĕмĕрĕн вĕçĕнче Рим çывăхĕнче тупса, Бельведерте — Ватиканта вырнаçтарса хунă. Некрасов çав паха йапаласене пурне те халăх тунă, тет. Естетсен шухăшĕпе, çав йапаласене халăх хушшăнмасăр тунă иккен.

Ĕç тума мар, çĕмĕрме çеç ăста,
Варвăрсем! Ӳсĕр çынсенĕн купийĕ...
Чим, Ванйукпа иртерĕр вăхăта.
— Вилĕмпе хурлăх çинчен тек ан калăр,
Пĕчĕкскерне кирлĕ мар хăратма.
Есĕр ĕнтĕ ачана хал кăтартăр
Сутă йенне те...

IV

Хавас кăтартма!
Чунăм, итле! Йывăр ĕçĕсем пĕтнĕ—
Нимĕç хыват ĕнтĕ релсăсене.
Вилĕсене йăлт пытарнă. Ав, кĕртнĕ
Чирлисене те землйанкăсене.
Ĕç çыннисем кантура халĕ пухăннă...
Ĕнсисене хыттăн хыçнă вĕсем.
Кашни подрйадчике парăмлă пулнă,
Пĕр пуса ларнă иртернĕ кунсем.
Десатниксем шута илнĕ пурне те—
Мунчана кайнине, чирпе выртнине...
„Халĕ алла та пăртакçă тивет тен,
Кай та калаç ес!".. сулаç алсене...
Симĕс сăхманлă—хисеплĕ лабасçă,
Пăхăр пек хĕрлĕ, шыçмак, кутамас,
Пычĕ подрйадчик çул тăрăх мăнаслăн
Уйава, хăй ĕçне сăнама.
Нăрăнчĕ халăх ăна çул памашкăн...
Шăлчĕ подрйадчик тарне пит çинчен,
Вăл вара тин тытăнчĕ каласмашкăн:
„Йурĕ... апла-тăк... аван... пит чечен..."
„Савăнăçлăн кайăр киле—ыр сунатăп!
(Хывăр калпак—калаçатăп-тăк еп!)—
Парăп сире йулашки укçана та,
Парăп сире еп пĕр пичке ерех!.."
Такăп „урра" кăшкăрчĕ. Сас вăйланчĕ.
Кăшкăрчĕç пурте. Десатникĕсем
Йурăпала пĕр пичке пырса пачĕç...
Халĕ йулхав та тăмаст ӳркенсе.
Ĕç пăрахсах, пуçлăха ăсатмашкăн
Тухрĕç пур халăх. Йанăрĕ „урра!.."
Йывăр вĕт, савăнăçларах кăтартмашкăн
Çакă ĕçе, генерал?

Уйли Варлюке куçарнă.

100 пăтран кайа илекен пĕр колхоз та пулмалла мар

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ тата ПСК(б)Парти Тĕп Комитечĕ çуракине хатĕрленес ĕç мĕнле пыни çинчен йышăннă постановленине сӳтсе-йавас тĕлĕшпе йанварĕн 5—6-мĕшĕсенче çĕрĕç работникĕсен республикăри канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлура ПСК(б)П райком секретарĕсем, райĕçтăвком председателĕсем, МТС директорĕсем, çĕрĕç пайĕн пуçлăхĕсем, агрономсем, колхоз председателĕсем тата ыттисем те пулчĕç.

Кăçалхи бољшевикла çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе пирĕн республикă чăтма çук начар ĕçлет, ытти облăçсемпе тата республикăсемпе танлаштарсан—питĕ кайра пырат.

Вăрлăх республикĕпе 93 процент кăна хатĕрленĕ. Йĕтĕнпе кантăр вăрлăхне 55 процент, клевĕр вăрлăхне 44 процент, викăна—85 процент хатĕрленĕ. Мĕнре сăлтав? Пĕтĕм сăлтав та выранти çĕрĕç органĕсем тата Çĕрĕç халăх комиссариачĕ тимсĕрлĕхлĕ пулнинче, тата вĕсен ĕçĕсенче çавăрăнăçусăрлăх пурринче. Çавна пула ĕнтĕ Йĕпрес районĕ акмали тĕштырă вăрлăхне 42 процент, викă вăрлăхне 25 процент çеç хатĕрленĕ. Патăрйел районĕ клевер вăрлăхне 1 процент хатĕрленĕ(!). Канаш районĕ те питĕ кайра пырат. Кунта тĕштырă вăрлăхне 63 процент, викă вăрлăхне 42 процент хатĕрленĕ.

Акма хатĕрленĕ вăрлăхсене тасатас ĕçе нихăш район та бољшевикла тытăнман. Вăрлăха тасатас плана Йĕпрес районĕ 3 процент, Хĕрлĕ Чутай районĕ 4 процент кăна тултарнă. Çавăн пекех Сĕнтĕрвăрри, Турхан, Йелчĕк, Тăвай, Патăрйел т. ыт. районсенче те. Республикă вăрлăха тасатас плана 14 процент çеç тултарнă.

Республикăри районсенчен нумайĕшĕ вăрлăхсене колхозсемпе районсем хушшинче улăштарас ĕçе тытăнман-ха. Елĕк, Канаш, Хĕрлĕ Чутай, Турхан, Шупашкар, Шăнкăртам, Тăвай т. ыт. районсем йур тытас ĕçе, тислĕк, торф, кĕл тата ытти удобренисене пухма пуçăнман.

Тракторсене йусас плана (4-мĕш квартал) Шупашкар МТС—18 процент, Тутаркас—50 процент, Канаш—54,6 проц., Йелчĕк—55 проц. тултарнă. Кувакинă МТС 11 трактор йусанă, вăл шутран 4 тракторĕ ĕçе йурăхсăр. Кунта мастерскойра електричествă сути çук пирки тракторсене кăнтăр çутинче кăна йусаççĕ. Трактора йусама кирлĕ хатĕрсем çителĕксĕр.

Канашлура хăшпĕр çĕрĕç пайĕсен пуçлăхĕсем районра ĕçсем мĕнле пынине пĕлменни те палăрчĕ. Вĕсенчен хăшĕпĕрисем суйма та пăхаççĕ. Акă, Улатăр районĕнчи çĕрĕç пайĕн пуçлăхĕ Шчеглов йулташ Çĕрĕç халăх комиссариатне телефон тăрăх клевер вăрлăхне 175 центнер хатĕрленĕ тесе сводка панă. Чăнниппе илсен 93 центнер çеç хатĕрленĕ. Тăвай районĕн çĕрĕç пайĕн пуçлăхĕ Козлов йулташ районра çуракине хатĕрленес ĕç мĕнле пынине пĕлмест, ку çеç те мар, пĕр иккĕленмесĕрех суйма хăйуллăх çитерет, тăвас ĕçсем çине çăмăлтайăн пăхат вăл.

—Акмали вăрлăха пайанхи куна 59 процент тасатрăмăр,—тет вăл.

—Мĕнле-ха апла, сирĕн сводка тăрăх йанварĕн 1-мĕшне 8 процент тасатнă тесе кăтартнă. Пилĕк кунра 51 процент тасатрăр-и вара?—тет Л. С. Спасов йулташ. Козлов нимĕн те калама пултараймарĕ. ПСК(б)П райком секретарĕн Козлов йулташăн „йăнăшне" тӳрлетмеле пулчĕ. Районра вăрлăха 12 процент кăна тасатнă(!). Козлов районра миçе колхоз авăн çапса пĕтернине, кадрсене хатĕрлес тĕлĕшпе мĕн тунине, социалисăмла ăмăртупа стахановла йухăм мĕнле пынине пĕлмест. Пĕр трийер кун-каçа миçе центнер тасатма пултарнине те пĕлмест!

Канашлу хупăнас умĕн ПСК(б)П Обком секретарĕ Г. И. Иванов йулташ тӳхса каларĕ. Парти Обкомĕпе Халăх Комиссарĕсен Совечĕ лартнă задачăна—100 пăтран кайа илекен пĕр колхоз та пулмала мар лозунга пурнăçа кĕртес тесен, çуракине хатĕрленес ĕçре татăклă улшăну тумала, пĕтĕм ĕçе бољшевиклă организацилесе агротехникăла ĕçсене пурне те пурнăçа кĕртсе пымала.

Чи, малтанах колхозсемпе колхозниксем хушшинче социалисăмла ăмăрту ударлă тата стахановла ĕçлес йухăма сарса йамала.

Епĕр вăйлă тырпул туса илес тетпĕр пулсан,—тет Иванов йулташ,—пирĕн чăнчăн бољшевикла ăмăрту организацилемеле.

Аслă Совет суйлавĕ массăн политикăла тата производствăла активлăхне пит çӳле сĕклентерчĕ. Çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе те çавăн чухнехи пек активлăхпа ĕçлемеле.

Вăйлă тырпулшăн кĕрешес ĕçе кабинетра ларса мар, колхозсенче, бригадăсенче, звеносенче пĕтĕм массăпа пĕрле иртермеле. Агрономсен колхозниксене агротехникăна вĕрентес ĕçре йалан пулăшу парса пымала. 1938 çулта стахановла вăйлă тырпулшăн кĕрешес ĕçре пур майсемпе усă курма тăрăшмала.

Канашлу çуракине хатĕрленес ĕçре малта пыракансене паллă тума республикă хисеп хăми организацилеме кирлĕ тесе шутларĕ. Çуракине хатĕрленес ĕçсен итогне тума февраљ уйăхĕнче колхозниксен республикăри слетне пухмала тесе йышăнчĕ.

Малта пыракан пĕр колхоз ĕçĕсемпе ĕмĕчĕсем

Шăхасан районĕнче çуракине лайăх хатĕрленекен колхозсенчен Ушакарти Калинин йачĕпе тăракан колхоз кăçал уйрăмăнах хытă тăрăшса ĕçлет. Капла çеç те мар, Калинин йачĕпе тăракан колхоз Шăхасан районĕнче 1938 çулхи вăйлă тырпулшăн кĕрешес ĕçе пуçарса йараканĕ пулса тăчĕ. Декабĕрĕн 12-мĕшĕнче пулса иртнĕ колхозниксен аслă пухувĕ Шăхасан районĕнчи пур колхозниксене те 1938 çулта татах та вăйлă тырпул илессишĕн кĕрешме чĕнчĕ.

1937 çулта Ушакарти колхоз агротехникăла ĕçсен планне пĕтĕмпех пурнăçа кĕртнĕ. Чылай ĕçсем йĕнĕпе плана ытлашшипех тултарнă. Çав май вĕсем 1937 çулта тухăçлă тырпул пуçтарса кĕртнĕ. Çавна кура кăçал агротехникăла ĕçсен планне татах та пысăкрах йышăннă.

Колхоз чи малтанах вăрлăх хатĕрлес ĕçе тытăннă. Ушакарти колхоз пĕчĕк мар, 200 кил ытла тăрат, çавăнна сĕрте аслă, вăрлăх та нумай кирлĕ. Çуракинчĕ кирлĕ вăрлăха халь пĕтĕмпех уйăрса суртласа тасатса хунă. Вăл шутран пăрса вăрлăхне пурĕ 74 центнер алăпа пĕрчĕн суйласа тасатнă. Çавăн пекех тата 154 центнер сурхи тулă вăрлăхне тĕплĕн аласа суртласа хунă.

Йалхуçалăх машинисем те хатĕр, пурне те йусанă. Вăл çеç те мар, машинăсемпе ĕçленĕ чух кирлĕ пайавсене те çĕнĕрен туса хатĕрленĕ. Çуракинче кирлĕ машинăсене çеç мар, тырпулсене пуçтарса кĕртнĕ чух кирлĕ машинăсене те çу сĕрсе хатĕрлесе лартнă. Халь колхозăн 4 жнейки те йусавлă лараççĕ.

Çавăн пекех колхоз 1938 çулхи агротехникăла ĕçсен планне те — хĕлле тумали ĕçсене пурнăçа кĕртсе çитерет. Акă, йур тытма 350 гектар йышăннă пулсан, пайан куна плана тултарнă. Çĕре çемçетмели йапаласене пухас тĕлĕшпе колхоз 1938 çулхи плана çапла тултарнă:

	План	Пухнă
Торф кăларасси	1500 тоннă.	5310 лав.
Тислĕк	3500 тоннă.	2853 т.
Кайăк-кĕш. тислĕкĕ	90 цент.	83 цент.
Фекали	200 цент.	211 цент.
Кĕл	191 цент.	187 цент.
Минерал çăнăхĕ	27 тоннă.	29 тоннă.

Çĕре çемçетмели йапаласене хатĕрлес тĕлĕшпе уйрăмăнах çак колхозниксем тăрăшса ĕçленĕ: Михайлов Сергей, Михайлова Мавра, Матвейов Григори, Амасов Петр тата ыт. те.

Агротехникăла ĕçсен планне Калинин йачĕпе тăракан колхоз икĕ хут ытлашши тултарма тăрăшат. Мĕншĕн тесе вĕсем кăçал никăçан пулман вăйлă тырпул—вăтам шутпа гектартан 125—150 пăт тырă илессишĕн кĕрешеççĕ.

Ушакарти колхоз председателĕ С. Йегоров йулташ колхоза лайăх йертсе пырат. Çавăнпа вăл йанварĕн 5—6-мĕшĕнче пулса иртнĕ çĕрĕç работникĕсен республикăри канашлăвĕнче пулма тивĕçлĕ пулчĕ.

М. К.

Драмкружок аван ĕçлет

Сĕнтĕрвăрри. „Осоавиахим" колхоз çумĕнчи драмкружок иккĕмĕш çул ĕçлет ĕнте. Драмкружок иртнĕ çулта пурĕ 32 спектакљ лартнă, вăл шутран çывăхри йалсене те тухса лартнисем пулнă.

Н. Иванов.

Перепис ăнăçлăн иртрĕ

СĔНТĔРВĂРРИ (хамăр корр.). Йанварĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа пĕтĕм Совет Сойузĕпе выљăх-чĕрлĕх шута илесси (перепис) пулса иртрĕ. Çак переписе районри халăх хуçалăхне шута илессипе ĕçлекен районри инспектурă тивĕçлипе хатĕрленсе иртерчĕ. Перепис умĕн районри кашни инспектор участкинче кашни йалтах, участкăсенчи инспекторсем халăх хушшинче перепис çинчен ăнлантарнă. Уйрăмăнах çак перепис иккĕмĕш пйатилеткăна тултарнине кăтартса, çавăнпа пĕрлех виççĕмĕш пйатилеткăн планне тума пулăшни, тата перепис Совет Сойузĕнче выљăх-чĕрлĕх ĕрчетессин 20 çул хушшинчи ӳсĕмĕсене кăтартса пани çинчен тĕплĕн ăнлантарнă. Перепис çинчен тĕплĕн ăнлантарнă. Перепис çинчен массăлла-ăнлантарулă ĕçе тĕплĕн туса пынипе районри пур йалсенче те тонĕ пекех колхозниксемпе йединоличниксем счетчиксене кăмăллăн кĕтсе илсе хăйсен выљăхĕсене тĕрĕс сыртарнă.

Пĕтĕмĕшпе илсен, переписе тĕплĕн иртернĕ, анчах çапах та переписĕн малтанхи кунĕсенче хăшпĕр йалсенче тăшманла сынсем переписе иртерме чăрмантарма тăнисем те пулчĕç. Акă, Йуртакасси йалсоветĕнче счетчике Демидов Павел кĕрсе йулнă пулнă. Çак счетчик Йуртакасси йалсоветĕнче хăй тĕплĕн пĕлсе тăнă çĕртепех анчах çавăрланă сысна çурисене, самăртма хупнă сыснисене, сурăхсемпе çамрăк путексене пурĕ 40 пуç тата 1 ĕне сыртармасăр хăварнă. Пуçпаркасси йалĕнче колхоза сăтăрласа тăшманла ĕç тунăшăн колхозран кăларнă Григорйев Иван переписрен пытарса 1 лаша, 3 сурăх, 2 сыснапа мунчана кайса хупса сыртармасăр хăварма тăнă.

Купсăр пуçне тата Магаç йалсовет председателĕ Корнилов перепис ĕçне йалтах путлантарса лартма тăнă. Вăл перепис кунĕ тĕлне ситсен те перепис иртернĕ çĕрте ĕçлеме колхоз активĕнчен бригадă туман. Йанварĕн 1-мĕшĕнче Корнилов, счетчик Илйински Григорине:

— Есĕ переписшĕн ответлă, перепис ваљљи хăвах кама килĕштерен, çав сынсене уйăрса ил те, пайан перепис иртер, манăн перепис пирки ĕç çук, приказанно тебе и выполняй,—тесе кутăнлашса ларнă. Халь çакнашкал тăшманла ĕç тăвакансене тăрă шыв çине кăларнă. Переписе лайăх, тĕплĕн иртерес ĕçре йалсоветсемпе колхозсенчи актив тăрăшса ĕçлерĕ.

В. Василйев.

Пĕтĕм Сойузри выљăх-чĕрлĕх переписĕ

Пĕтĕм Сойузри выљăх-чĕрлĕх переписĕ кăçал иртнĕ çулхисем пек мар, чылай ăнăçларах иртсе пырат. Шутлав участкисем пĕтĕмпе 155.397 пулсан, пĕрремĕш кунĕнче перепис 152.129 участкăра пуçланнă. Иккĕмĕш кунĕнче ытти мĕн пур участкăсем те перепис тума тытăннă.

Перепис пысăк çĕкленупе иртсе пырат. Перепис ĕçне пулăшма йалсоветсемпе колхоз правленийĕн представителĕсенчен тата активран тунă бригадăсем счетчиксене лайăх пулăшаççĕ.

Шутлав участкисенчен çуррине йахăн переписе пĕтернĕ те ĕнтĕ. Пур çĕрте те выљăх-чĕрлĕх шучĕ чылай ӳсни палăрат.

Перепис мĕнле иртнине контроль туса тухни пысăк вырăн йышăнса тăрат. ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ выљăх-чĕрлĕх переписĕ çинчен йышăннă постановлени хушнă тăрăх, мĕн пур шутлав участкисенче те çавăн пек контроль туса тухмала.

(ТАСС).

Испанири фронтсенче

Теруел районĕнче (хĕвелтухăçри фронт) çапăçакан фашисла çарсем йанварĕн 5-мĕшĕнче те республикă позицийĕсем çине атакăланă. Республиканецсем атакăсене сирсе пăрахнă çеç те мар, тата тăшманăн чылай окопĕсене йышăнса илнĕ.

Теруелре республикă чаçĕсем хирĕç тăракан фашиссен йулашки йăвисене пĕтереççĕ. Гранатăсемпе персе Санта-Клара монастыр çуртне çĕмĕрсе салатса тăкнă. Çурт ишĕлчĕкĕ айне пулса фашиссем нумай вилнĕ.

Теруел патĕнчи çапăçура фашиссен пысăк çухатусем пулнипе вĕсен ударнăй чаçĕсем чылай вăйсăрланнă.

Теруеле республиканецсем туртса илнĕ май Франко генерал Кастелйано генерала тата Теруел гарнизонĕнчи пăлхавçăсен чаçĕсене йертсе пынă темиçе полковнике арĕслесе тĕрмене хупнă.

***

Испанире пур çĕрте те нихăçан пулман сивĕ тăрат. Мадридра 11 градус сивĕ. Теруел районĕнче вăхăчĕ-вăхăчĕпе сивĕ 17 градуса таран çитет. Республикă влаçĕсем фронтри чаçсене сивĕрен сыхлама мерăсем йышăннă. Чаçсене çĕнĕрен ăшă тумтирсем хушса панă.

***

Испани республикĕн президенчĕ кăларнă декрет тăрăх Н-ски дивизи командирне, республикă çарĕн паллă организаторĕсенчен пĕрине—Енрике Листер майора—Теруел участкинчи çапăçура калама çук чаплă та мухава тивĕçлĕ ĕç тунăшăн подполковник тунă.

(ТАСС).

Китайри вăрçă

Тĕп фронтри Китай çарĕсем çак кунсенче Нанкинран кăнтăрарах тата кăнтăр-хĕвелтухăçнерех пуçланă хăйсен контрнаступленине ăнăçлăн сарса пыраççĕ.

Нанкинран кăнтăрарах, Аньхуей провинцинче, Китай чаçĕсем стратеги йенчен пысăк вырăн йышăнса тăракан Уху (Йанцзы йуханшывĕ çинче) тата Сӳанчен хулисене йышăнса илнĕ. Китай çарĕсен малта тăрса çапăçакан чаçĕсем, партизансемпе пĕрле, Ханчжоуна (Чжецзйан провинцин столици, пырса кĕнĕ. Йапони командованийĕ, Ханчжоуна хăйĕн аллинчен йанипе питĕ хытă тарăхнăскер, Ханчжоу çине тата унăн таврашĕнчи вырăнсем çине татти-сыпписĕр бомбăсем пăрахат.

Тĕп фронтри Йапони çарĕсем хушшинче вырăс шургвардейцисем пуррине палăртнă.

Нанкинран çурçĕререх йулашки иртнĕ кунсенче çапăçусем пулман.

Йанварĕн 3-мĕшĕнче Китай самољочĕсем Уху тата Датун хулисем хушшинче Йанцзы йуханшывĕ çинче ларакан Йапони карапĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Бомбăсем пăрахса Йапонин икĕ çар карапне шыва путарнă. Йанварĕн 5-мĕшĕнче Китай самољочĕсен ескадрилийи Уху патĕнчи Йапони аеродромĕ çине ăнăçлăн тапăннă. Самољотсем 76 бомба пăрахнă. Йапонин 6 самољотне пĕтернĕ. Йанварĕн 3-мĕшĕнче Аньхуей провинципе Китай çарĕсем Йапони самољотне персе ӳкернĕ.

Çурçĕр Китайра лару-тăрусем улшăнмасăрах тăраççĕ.

(ТАСС).

Районри Ĕçтăвакан Комитетсем çумĕнче вырăнти промышленнăç тата коммуналлă хуçалăх пайĕсем тăвасси çинчен

Чăваш АССР Тĕпĕçтăвкомĕпе Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă постановлени

Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕпе Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çапла йышăнаççĕ:

1. Чăваш АССР Конституцин 63-мĕш статйи тăрăх Канаш, Йетĕрне, Турхан, Çĕмĕрле, Шăмăршă тата Сĕнтĕрвăрри райĕçтăвкомĕсем çумĕнче вырăнти промышленнăç пайĕсем тăвас.

2. Коммуналлă-çуртйĕр хуçалăхĕ тăрăх пур райĕçтăвкомсенче те техник-инспектор должнăçĕ кĕртес.

Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитет председателĕ З. АНДРЕЙЕВА.

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕ Л. СПАСОВ.

Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитет секретарĕ Т. ВАСИЛИЕВ.

Шупашкар, 1938 çулхи йанварĕн 5-мĕшĕ.

Шахмăт турнирĕ

СĔНТĔРВĂРРИ. Йанварĕн 4-мĕшĕнче култура çуртĕнче шахмăт турнирĕ пулса иртрĕ. Турнирта Чăваш республикĕнчи шахмăт чемпионĕ Студенецкий пĕр харăс 14 шахмăт хăми çинче 14 сыппа выљарĕ. 13-шĕ Студенецкий йулташа парăнчĕç. Йулашкинчен Студенецкине райсутĕç пайĕнче ĕçлекен Шљапин й. çĕнтерчĕ.

В. Василйев

Пĕлтерӳ

Йанварĕн 9-мĕшĕнче каçхине 7 сехетре Йалхуçалăх институчĕн залĕнче Сталинла Конституцийе ăнлантарас ĕçре тата суйлав кампанийĕ вăхăтĕнче ĕçленĕ агитаторсен, вулакансен-беседчиксен, пропагандиссен канашлăвĕ пулат. Партипе комсомол организацисен секретарĕсем тата парторгсем çӳлте кăтартнă сынсене вăхăтра çитермеле.

ПСК(б)П Хула комитечĕ.

Чăваш АССР Финанс Халăх Комиссариачĕн 247 № приказĕ

30-XII—1937 ç.

Уйрăм çынсенчен тупăш тăрăх хуракан налог ĕçĕсене туса иртерессипе тата çав налога 1938 çулта тӳлемели сруксем çинчен.

ССР Сойузĕн Тĕпĕçтăвкомĕ тата Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1934 ç. майăн 17-мĕшĕнче уйрăм çынсенчен тупăш тăрăх хунă налога пухасси çинчен çирĕплетнĕ положенин 27 тата 29-мĕш статйисем тăрăх тата ССР Сойузĕн Финанс Халăх Комиссариачĕн 1936 çулти мартăн 10-мĕшĕнче тупăш тăрăх хунă налог йĕркин 187 номĕрлĕ инструкцийĕн 49-мĕш параграфĕ тăрăх, Чăваш АССР-че 1938 çулта уйрăм çынсенчен тупăш тăрăх хунă налога пухас ĕçĕн тĕп ĕçĕсене туса иртерме çак сруксене палăртас:

1. Ĕçукçин çирĕп нормисем тăрăх, налог хунисемсĕр пуçне, пĕтĕм тӳлекенсем, I, II тата III категорисене кĕртнисем, ку шута кустарсемпе ремесленниксене кĕртмесĕр, 1938 çулти йанварĕн 20-мĕшĕчен хăйсем пурăннă çĕрти районри тата хулари финанс пайĕсене 1937 çулта илнĕ хăйсен тупăшĕсем çинчен декларации памала.

2. Çак приказăн I пунктĕнче кăтартнă тӳлекенсене 1938 ç. йанварĕн 25-мĕшĕнчен районри тата хулари финанс пайĕсен иртнĕ çулта илнĕ тупăшсене пĕтĕмпе шута илсе тупăш налогне шутласа памала. 1937 çулти тупăш тăрăх районри тата хулари финанс пайĕсем шутласа хунă подоходнăй налогпа 1937 çулти окладран тӳленĕ хисеп хушшинче уйрăмлăх пулсан, çав уйрăмлăха тӳлемели пĕлтерӳне илсен, 15 кун хушшинче тӳлесе татмала.

3. II категорине кĕртнĕ кустарсемпе ремесленниксем,—вĕсем çирĕп ĕçукçи нормисем тăрăх тӳлеççĕ,—(полож. 24 ст.) 1938 çулта подоходнăй налог окладне пĕртан хисеппе—мартăн I, майăн I, ийулĕн I тата 1938 ç. октаберĕн 1-мĕшĕнче тӳлемеле.

4. Ытти тӳлекенсем, I, II тата III категорине кĕртнисем, иртнĕ çулшăн шутласа панă доходран 25-шер процент мартăн I-мĕшĕнче, майăн I-мĕшĕнче, ийулĕн I-мĕшĕнче тата октаберĕн I-мĕшĕнче тӳлемеле.

Пирвайхи хут налог тӳлекенсем кăтартнă сруксенче районри тата хулари финанс пайĕсем 1938 çулта пулма пултаракан тупăшран шутласа хунă оклада 25-шер процент тӳлеççĕ.

Чăваш АССР Финанс Халăх Комиссарĕн заместителĕ—Срибный.

Ответлă редактор заместителĕ И. П. ПАВЛОВ-ПИНЕР.

АКАДЕМИ ТЕАТРĔНЧЕ

Йанварĕн 8-мĕшĕнче шкул ачисене ваљљи кăнтăрлахи спектакљ

ТУР тăван шата ШЕЙНИН

„ОЧНАЯ СТАВКА"

(4 пайлă, прологлă)

Кăнтăрла 12 сехетре пуçланат.
Билет хакĕсем 75 пусран 2 т. 50 пус таран

КАÇХИНЕ

А. Н. Островский

Чăвашла спектакљ

„БЕДНОСТЬ НЕ ПОРОК"

Талон № 76 Абонемент № 1
Талон № 9.

Чăваш АССР Республикинчи Шалти Суту-иљу Халăх комиссариачĕн ВĔРЕНӲ КОМБИНАЧĔ

Прилавкă работникĕсене вĕрентмелу 3 уйăхлăх курс организацилет.

Курса Чебторг, „Бакалея" Магазинĕ тата Вăрманпромторг организацийĕсем панă командировкăсем тăрăх çеç йышăнаççĕ. Обшчежити, стипенди тата хватер пулмаст.

ДИРЕКЦИ

Шупашкар хулинчи финанс пайĕ

Шупашкарти пур граждăнсене те

ПĔЛТЕРЕТ

Тупăш тăрăх тӳлекен налог çинчен кăларнă положенин 49-мĕш §§ тăрăх 1937 çулта, ĕçукçипе пенçисĕр пуçне, çуртсене (хватерсене, пӳлĕмсене) тара парса, аластапа ремесла ĕçĕпе тупăш илнĕ

ПУР ГРАЖДĂНСЕМ ТЕ

1938 çулхи йанварĕн 20-мĕшĕнчен кайа йулмасăр 1937 çулта мĕн чухлĕ тупăш илни çинчен

ДЕКЛАРАЦИ ПАМАЛА.

Çулталăкра 700 тенкĕрен кайа тупăш илекенсене деклараци парассинчен хăтараççĕ.

Деклараци паманшăн, йе тата вăхăтра паманшăн та 200 тенке çити штраф хураççĕ, суйа панăшăн уголовнăй йĕркепе ответ тыттараççĕ.

Деклараци бланкисене хулари финанс пайĕнче илмеле (Промсойуз çурчĕ, айалти хут).

Хулари финанс пайĕ.

Шупашкарти спиртзавочĕн

Шупашкарти тата районсенчи, йалсенчи ерех сутакан пур магазинĕсем те

ТĔРЛĔРЕН ВИÇЕЛĔ ЕРЕХ ПОСУДИСЕНЕ СУТĂН ИЛЕÇÇĔ.

Граждăнсем! Ерех посудисене ерех магазинĕсене илсе кайса, парăр!

Дирекци.

Чăвашсен филармонийĕ

Чăвашсен Государствă хорĕнче йурлама

Хористсене çĕнĕрен йышăнат

Лайăх сасăлисене, лайăх çивĕч илтекенсене тата музăкăн тĕп грамотине пĕлекенсене, 30 çултан аслă марисене суйласа илеççĕ.

Зайавленисене çак адреспа йамала: Герцен урамĕ, 9.

Испытанисем йанварĕн 11 тата 12-мĕшĕнче 12 сехетрен пуçласа 5 сехетчен Театр училишчинче 2-мĕш хутлăхра пулаççĕ

Дирекци.

ЧЕБОКСАРСКИЙ ГОРОДСКОЙ ТОРГ НКВТ ЧАССР

ЧЕБТОРГ МАГАЗИНĔСЕНЧЕ ГРУЗИ ĔÇĔМÇЫРЛИ ЕРЕХĔСЕНЕ ЫЙТĂР:

Портвейн №№ 12, 35, 37; портвейн лайăхраххи №№ 13, 36, 18, шурри № 36.

Кахетинское № 2 тата 36, Карданахи № 37 тата 39, Саамо, Мускатељ, Коньйак 4,5 çăлтăрлисем.

Садвинтрестпа Пахчаçимĕç организацийĕсен Горькири тата Хусанти завочĕсенче тунă наливкăсемпе настойкăсем.

Кахетинск № 36
Карданахи № 37
№ 13 Портвейн Крымский
Токай № 50
Коньяк особый

Пирĕн магазинсенче çак ерехсене илме ан манăр.

Английская горькая, Тминная, Пшеничная, Перцовка тата Нежинская рябинка.

Дирекция.

„Чăваш Коммунĕ" сырăнса илмели хаксем: 12 уйăха—30 т., 6 уйăха—15 т., 3 уйăха—7 т. 50 пус, 1 уйăха—2 т. 50 пус. Алсырăвĕсене кайала памаççĕ.

Уполномоченный Чувашгенента, № 13. Гор. Чебоксары, Типография №1. Чувашполиграфтреста заказ № 2. Тираж 14500, 98—52 см. 1—1 п. л.